33-2205

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!



# КОЛХОЗ ЙУХĂМĔН ЫЙТĂВĔСЕМ

СБОРНИК

ЧĂВАШПАРТИЗДАТ
1933

*Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!*

И. СТАЛИН

# КОЛХОЗ ЙУХĂМĔН ЫЙТĂВĔСЕМ

1. Çитĕнӳсем пирки пуççаврăнни
2. Кулаксен класне пĕтерес политикă çинчен хускатнă ыйту пирки
3. Колхозник йулташсене панă ответ
4. Йалта ĕçлесси çинчен
5. Колхозник-ударниксен Пĕтĕм Союзри пĕрремĕш сиесĕнче калани

ПСК(б)П ТК ИЗДАТĔЛСТВИН ЧĂВАШ УИРĂМĔ
ШУПАШКАР — 1933

Отпечатано в типографии № 1
Чувашгиза, г. Чебоксары,
Канашская, 16

# ÇИТĔНӲСЕМ ПИРКИ ПУÇÇАВРĂННИ

## Колхоз йухăмĕн ыйтăвĕсем пирки

Совет влаçĕн колхоз йухăмĕнчи çитĕнĕвĕсем çинчен халĕ пурте калаçççĕ. Пирĕн пысăк çитĕнӳсем пуррине тăшмансен те йышăнма тивет. Çак çитĕнӳсем чăнахах та питĕ пысăк.

Паллă, февралĕн 20-мĕш тĕлне пĕтĕм ССРС-пе хресчен хуçалăхĕсенчен 50 процентне коллективланă та ĕнтĕ. Çак вăл—епĕр 5 çуллăх плана 1930-мĕш çулхи февралĕн 20-мĕш тĕлне 2 хут *ытларах пурнăçа кĕртнине* пĕлтерет.

Паллă, çак çулхи февралĕн 28-мĕшĕ тĕлне çуртыррине акса хăварма колхозсем 36 мĕлйун центнĕр, урăхла—планăн 90 процентне, урăхла—220 мĕлйун пăт вăрлăх пухса хатĕрлесе хума ĕлкĕрнĕ. Паллах, пĕр колхозсенче кăна 220 мĕлйун пăт вăрлăх пухса хатĕрлеме пултарни—тыр-пул хатĕрлес плана ăнăçулă пурнăçа кĕртнĕ хыççăн—калама çук пысăк çитĕнӳ пулнине кăтартаť.

Мĕн çинчен калаççĕ-ха çаксем пурте?

Çаксем—*йал тĕпренех социалисăм йенеле çаврăнса кайасси ăнăçлăн пурнăçа кĕрсе пыни çинчен калаççĕ.*

Çак çитĕнӳсем хамăр çĕршывăн малашнехи кунçулĕсемшĕн, хамăр çĕршыва йертсе пыракан вăй пулса тăракан рабочи класшăн, йулашкинчен тата—партишĕн хăйшĕн те питĕ пысăк вырăн йышăнса тăни çинчен каласа тăмали те çук. Практикăри уççăнах курăнса тăракан усси çинчен каламасан та, вĕсем, çак çитĕнӳсем, партин хăйĕн шалти пурнăçĕшĕн, пирĕн партийе вĕрентсе пиçĕхтерессишĕн пит пысăк вырăн йышăнса тăраççĕ. Вĕсем пирĕн партийе хастарлăх параççĕ, хăйĕн вăйĕсене ĕненекен тăваççĕ. Вĕсем рабочи класа пирĕн ĕç çĕнтерессине ĕненекен туса вăй-хăватлантараççĕ. Вĕсем пирĕн парти çывăхнеле çĕнĕрен çĕнĕ мĕлйунлă массăсене пырса тăратаççĕ.

Çавăнпа парти задачи: тунă çитĕнӳсене *çирĕплетсе*, вĕсемпе малала кайас ĕçре йĕркелĕн *усă курмала*.

Анчах çитĕнӳсен хăйсен тĕксĕм йенĕ те пур, пуринчен ытла çак çитĕнӳсем „çăмăллăнах", „кĕтмен çĕртенех" тенĕ пек пулса пыраççĕ пулсан. Çакнашкал çитĕнӳсем хăшпĕр чухне мăнкăмăллантарса, аташтарса йаракан шухăшсем кĕртеççĕ: „Епĕр пурне те пултаратпăр!", „Пире пурте нимĕн те мар!". Вĕсем, çак çитĕнӳсем, час-часах çынсене ӳсĕртсе йараççĕ, çынсен вара çитĕнӳсене пула пуççаврăнма тытăнат, вĕсем виçене туйми пулаççĕ, ĕç чăн-чăнах йепле пынине ăнланайми пулаççĕ, хăйсен вăйĕсене ытлашши хак парса, тăшман вăйне ним вырăнне те хуми пулаççĕ, социалисăм тăвас ĕçĕн пĕтĕм ыйтăвĕсене те пуçăрланса „пĕр самантрах" татса пама хăтланаççĕ. Кунта ĕнтĕ—тунă çитĕнӳсене *çирĕплетсе хăварас*, вĕсемпе малала кайас ĕçре йĕркелĕн *усă курас* шухăш çук. Мĕне кирлĕ пире тунă çитĕнӳсене çирĕплетме—епĕр ахаљ те социалисăм пĕтĕмпех çĕнтересси патне „пĕр самантрах" чупса çитме пултаратпăр: „Епĕр пурне те пултаратпăр!", „Пире пурте нимĕн те мар!"—теççĕ вĕсем.

Çавăнпа парти задачи: çак ĕçшĕн хăрушă, сийенлĕ шухăшсемпе вирлĕн кĕрешмеле, вĕсене парти ăшĕнчен хăваласа кăлармала.

Çак ĕçшĕн хăрушă, сийенлĕ шухăшсем пирĕн партире чылайах сарăлнă тесе калама çук. Анчах вĕсем, çакăн пек шухăшсем, пирĕн партире пурах, вĕсем вăйланса пымĕç тесе калама та сăлтав çук. Çавăнпа вĕсем, çак шухăшсем, пирĕн хушăра çаплипех йулсан, колхоз йухăмĕн ĕçĕ чылай вăйсăрланса кайĕ, çак йухăмăн пĕтсе ларас хăрушлăхĕ те куç умнех тухса тăрĕ, кун пирки нимĕн иккĕленмели те çук.

Çавăнпа пирĕн пичетĕн задачи: çакнашкал ленинисăма хирĕç пыракан шухăшсене пĕр чарăнмасăр тăр шыв çине кăларса сивлесе пымала.

Акă хăшпĕр фактсем:

1. Пирĕн колхоз политики ăнăçлă пыни, ытти сăлтавсемсĕр пуçне, колхоз йухăмне хресченсем хăйсен ирĕкĕпе хутшăннинчен тата çак ĕçре СССР-ĕн тĕрлĕ районĕсенчи *условисен уйрăмлăхĕсене шута* илнинчен килет. Колхозсене вăйпа

тума йурамасть. Çапла туни айван, реакцилĕ ĕç пулнă пулĕччĕ. Колхоз йухăмĕ хресченсен тĕп масси çак йухăма хастарлăн пулăшса пынипе вăйланса пымала. Малта пыракан районсенчи колхоз тăвас ĕçĕн майĕсене илсе, вĕсене нимĕн улăштармасăрах кайра пыракан районсене куçарса ĕçлеме йурамасть. Çапла туни айван, реакцилĕ ĕç пулнă пулĕччĕ. Çакнашкал „политикă" коллективлас ĕçĕн идейне трукаx пăсса, çĕмĕрсе тăкнă пулĕччĕ. Колхозсем тăвас ĕçри хăвăртлăхсемпе çак ĕçĕн майĕсене палăртнă чухне ССРС-ĕн тĕрлĕ районĕсенчи тĕрлĕ уйрăмлăхсене тĕплĕн шута илмеле.

Колхоз йухăмĕ тĕлĕшпе пирĕн тĕш тырă тăвакан районсем чи малта пыраççĕ. Мĕншĕн? Мĕншĕн тесен, пĕрремĕшĕнче çак районсенче пирĕн çирĕпленсе çитнĕ совхозсемпе колхозсем урăх çĕртисенчен нумайрах, çавăн пирки кунта хресченсем çĕнĕ техникă вăйне, унăн пахалăхне чухласа илме, хуçалăха çĕнĕле, коллективла организациленин вăйне, унăн пахалăхне лайăх чухласа илме пултарчĕç. Мĕншĕн тесен, иккĕмĕшĕнче, çак районсен тыр-пул хатĕрлес кампанисем вăхăтĕнче кулаксемпе кĕрешес ĕçри икĕ çулхи опăт пур, çак, паллах, коллективизаци ĕçне çăмăллатмасăр пултарайман. Мĕншĕн тесен, йулашкинчен, çак районсене йулашки вăхăтра промышлĕннăç центрĕсенчен чи лайăх вăйсене нумай йарса тăнă.

Калама йурать-и çакнашкал лайăх условисем ытти районсенче те, сăмахран, пирĕн çурçĕр йенчи облăçсем пек хăйсен тулашĕнчен тырă кӳрсе тăранса пурнакан районсенче йе тата Туркестан пек кайа йулнă халăхлă районсенче те пур тесе?

Çук, çакна калама йурамасть.

Паллах, ССРС-ĕн тĕрлĕ районĕсенчи уйрăмлăхсене тĕплĕн шута илни, колхозсене ирĕклĕн тунипе пĕрле, колхоз йухăмне сыввăн ӳстерсе пырас ĕçре питĕ пысăк вырăнта тăрать.

Анчах мĕн пулса пырать-ха тепĕр чухне пирĕн ĕçре? Калама йурать-и колхозсене ирĕклĕн тунипе вырăнти условисене шута илес принципа хăшпĕр районсенче пăсмаççĕ тесе? Çук, çакна калама йурамасть. Паллă, сăмахран, хăшпĕр тырă сахал тăвакан çурçĕр йенчи районсенче, унта халех колхозсем тума кирлĕ условисем тĕш тырă тăвакан районри-

сенчен сахалтарах пулин те, час-часах колхозсене тума хатёреленес выранне колхоз йухамне чинавникле декретлама, колхоз ӳссе пыни ҫинчен резоԉуцисем ҫырма, хут ҫинче анчах куранса таракан колхозсем тума, чаннипе нимĕн те ҫук ҫинчех вĕсем „пурри" ҫинчен мухтанчаклă суйа резоԉуцисем ҫырса улталама хатланаҫҫĕ. Йе тата Туркестанри хăшпĕр районсене илер. Ҫак районсенче халех колхозсем тума условисем ҫурҫĕрти районрисенчен те сахалтарах. Анчах Туркестанăн хăшпĕр районĕсенче ССРС-ти малта пыракан районсене „хуса ҫитсе иртсе кайма" хăтланнисем те пулнă, вĕсем халех колхоза кĕмен хресченсене хĕҫпăшаллă вăйпа, уйсене шăварма шыв паманнипе тата промышлĕннăҫ таварĕсем паманнипе хăратма хăтланнă.

Мĕн пулма пултартăр-ха пĕр пекки ҫак унтĕр Пришибейĕв „политикипе" колхозсене ирĕклĕн тата вырăнти условисене шута илнипе туса пыракан парти политики хушшинче? Паллах, вĕсем хушшинче нимĕнле пĕрпеклĕх те ҫук, пулма та пултараймасť.

Кама кирлĕ-ха ҫак пăсăк ĕҫсем, ҫак колхоз йухăмне чинавникле декретланисем, ҫак хресченсене ниме тивĕҫсĕр хăратнисем? Пирĕн тăшмансемсĕр пуҫне никама та кирлĕ мар!

Аҫтала илсе ҫитерме пултараҫҫĕ вĕсем, ҫакнашкал пăсăк ĕҫсем? Пирĕн тăшмансене тĕреклентерсе, колхоз йухăмĕн идейне ҫĕмĕрсе тăкасси патнеле.

Паллă мар-и вара, политика ҫапла пăсакансем хăйсене „сулахайрисем" тесе шутлаҫҫĕ пулин те, вĕсем сылтăм оппортунисăм арманĕ ҫинех шыв йухтарни?

2. Пирĕн партин политикла стратегийĕн пĕр калама ҫук аслă пахалăхĕ вăл ҫакăнта: пирĕн парти кашни уйрăм вăхăтра йухăмăн *тĕп сыпăкне* суйласа илме пĕлет, вара ҫав сыпăка ҫаварса тытса, задача ăнаҫлăн татса парасшăн сыпăкăн пĕтĕм сăнчăрне пĕр тĕллев патнеле туртаť. Калама йураť-и парти халԑ колхозсем тăвас ĕҫре колхоз йухăмĕн тĕп сыпăкне суйласа илчĕ, тесе? Ҫакна калама йураť, каламала та.

Мĕнре пулса тăраť-ха вăл, ҫав тĕп сыпăк?

Тен, ҫĕре *пĕрлешсе ĕҫлемели йулташлăхсем* тунинче пуԉ?

Çук, унта мар. Çӗре пӗрлешсе ӗçлемели йулташлăхсем,—унта производствă хатӗрӗсене пӗрлештермен,—колхоз йухăмӗн иртсе кайнă сыпăкӗ пулса тăраççӗ.

Тен, йалхуçалăх коммунӗсем тунинче пуђ? Çук, коммунăсем тунинче мар. Коммунăсем халђ колхоз йухăмӗнче пит сахал тӗл пулаççӗ. Йалхуçалăх коммунӗсене *тӗп* формă тума,—унта мӗн пур производствă çеç те мар, валеçӳ те пӗрлешнӗ,—халђ условисем пулса çитмен-ха.

Колхоз йухăмӗн тӗп сыпăкӗ, унăн *тӗп* форми халђхи вăхăтра—*йалхуçалăх ертелӗ* пулса тăрать, çав сыпăка йарса тытмала та ӗнтӗ пирӗн халђ.

*Йалхуçалăх ертелӗнче* прозводствăн тӗп хатӗрӗсене пуринчен малтан тӗш тырă хуçалăхӗ тӗлӗшпе пӗрлештернӗ: ӗçе, çӗрпе усă курассине, машинăсемпе ытти ӗç хатӗрӗсене, ӗç выђăхне, хуçалăхлă çуртйӗрсене. Ертелре çурт вырăнӗсене (пӗчӗк анкартисене, сатсене), пурăнмали çуртсене, сӗт выђăхӗн пӗр пайне, вак выђăх-чӗрлӗхе, кайăк-кӗшӗке, т. ыт. те пӗрлештермеççӗ. Ертел тӗш тыр тăвас ыйтăва (проблемăна) татса паракан чи килӗшӳлӗ тӗп формă пулса тăрать, çавăнпа та вăл *колхоз йухăмӗн тӗп сыпăкӗ* пулса тăрать. Тӗш тыр тăвас ыйту *пӗтӗм йалхуçалăх ӗçӗнче тӗп сыпăк пулса тăрать*, мӗншӗн тесен çак ыйтăва татса памасăр выђăх-чӗрлӗх усрассине те (ваккине, шултрине), промышлӗннăçа чӗр тавар тăратакан техникăлă, специађнăй куђтурсене тăвас ыйтăва та татса пама май çук. Акă мӗншӗн ӗнтӗ колхоз йухăмӗн çиçтеминче халђхи вăхăтра йалхуçалăх ертелӗ тӗп сыпăк пулса тăрать.

Çакна асра тытса çырнă та ӗнтӗ пайан[1]) пичетленсе тухакан колхозсен „Примерлă уставне“.

Çак шухăша тӗпе хурса ӗçлемеле те ӗнтӗ пирӗн партипе совет работникӗсен; вӗсен çав устава тӗплӗн вӗренсе, ăна пурнăçа кӗртсе çитерессишӗн тăрăшса ӗçлемеле.

Çакнашкал ӗнтӗ партин çулйӗрӗ халђхи вăхăтра.

Калама пулать-и партин çак çулйӗрне тӗп-тӗрӗссипех, пӗр пăсмасăрах пурнăçа кӗртсе пыраççӗ тесе? Çук, апла калама пулаймасть. Паллă, ССРС-ӗн хăшпӗр районӗсенче колхоз-

1) „Правда“, 1930 ç. 2 март.

сене ҫӑлса хӑварассишӗн кӗрешес ӗҫ ҫаплах пӗтмен, ертелсене тӗреклетеймен пулсан та, ертелрен иртсе кайса, тӳрех йалхуҫалӑх коммунӗ ҫине сиксе ларма хӑтланнисем пур. Ертеле тӗреклетмен—ҫапах та вӗсем халех пӳртсене, вактӗвек выљӑхсене, кайӑк-кӗшӗке „пӗрлештереҫҫӗ" те; ҫак „пӗрлештерни", кирлӗ условисем ҫук пирки, хут ҫинче бӳрократла ·декретлани кӑна пулаť. Колхозсенче тӗш тыр тӑвас ыйтӑва татса панӑ, вӑл хаљхи вӑхӑтра иртсе кайнӑ тапхӑр, хаљхи вӑхӑтра тӗп задачӑ тӗш тыр ыйтӑвӗсем мар, выљӑх-чӗрлӗх, кайӑк-кӗшӗк ӗрчетес ыйтусем пулса тӑраҫҫӗ, тесе шутлама пулаť ҫакна илтсен. Ыйту тухса тӑраť: кама кирлӗ ҫак колхоз йухӑмӗн тӗрлӗ формисене пӗр ҫӗре купаласа тӑкас тӗлӗшпе пуҫӑрланса „ӗҫлени"? Кама кирлӗ ҫакнашкал мала чупса иртсе кайнипе айван тата сийен ӗҫ туни? Колхозсем тӑвас ӗҫре ертелле формӑна тӗреклетичченех, тӗш тыр тӑвас ыйтӑва татса паричченех хресчен-колхозниксене пурӑнмали ҫуртсене, пӗтӗм сӗт выљӑхне, пӗтӗм вак-тӗвек выљӑха, кайӑк-кӗшӗке пӗрлештерсе аппаланнипе йӗкӗлтени,—паллах мар-и мӗн ҫакнашкал „политикӑ" вӑл—пирӗн чи хайар тӑшмансемшӗн анчах усӑлӑ пуласси? Пӗрлештерме йуратакан ӑстасенчен пӗри тата пуҫӑрланса ертел тӑрӑх приказ та кӑлараť. Ҫак приказра вӑл „виҫӗ кун хушшинче кашни хуҫалӑхра мӗн чухлӗ кайӑк-кӗшӗк пуррине те шута илме" хушаť, учот туса пӑхса тӑма йатарласах „командирсем" лартма, „ертелте йертсе пыракан вырӑнсене йышӑнма", „поста пӑрахмасӑр социалисӑмлӑ кӗрешӗве йертсе пыма хушаť,—ҫапла вара, паллах, ертеле пӗр чышка чӑмӑртаса лартма хушаť. Ҫак мӗн—колхоза йертсе пырас политикӑ-и йе колхоза *ҫӗмӗрсе*, унӑн *йатне ҫӗртес* политикӑ пулаť-и? Епӗ кунта, ертел тӑвас ӗҫе чиркӳ чанӗсене антарнинчен *пуҫлакан* ҫивӗч „революционерсем" ҫинчен каламастӑп та. Питех те „ррреволюцилӗ" ӗҫ—чансене антарни!..

Мӗнле пулса кайма пултарнӑ-ха пирӗн хушӑра ҫак „пӗрлештерес" тӗлӗшпе пуҫӑрланса хӑтланнисем, ҫак хамӑр урлӑ хамӑрах сиксе каҫма хӑтланнӑ йапаласем, ҫав классемпе клас кӗрешӗвӗнчен пӑрӑнса кайма пӑхни, анчах ӗҫре—

клас тăшманĕсен арманĕ çине шыв йухтарни? Вĕсем пирĕн колхоз тăвас ĕçĕн фронтĕнче „çăмăллăнах" тата „кĕтмен çĕр-тенех" çитĕнӳсем пулнинчен анчах тухма пултарнă. Вĕсем пирĕн партин пĕр пайĕнче пуçсăрланас шухăшсем палăрнинчен анчах тухма пултарнă: „Елĕр пурне те пултаратпăр!", „Пире пурте нимĕн те мар!". Вĕсем—пирĕн хăшпĕр йулташсен çитĕнӳсене кура пуçĕсем çаврăнса кайнă пирки, вĕсем пĕр самантлăха ӳçă ăс-пуçпа шухăшлама пăрахса тĕрĕс курми пулнă пирки анчах пулма пултарнă.

Колхоз тăвас ĕçре хамăрăн çулйĕре тӳрлетес тесен, *çакăн пек шухăмсене* пĕтерес пулаť.

*Çакă ĕнтĕ хаљ пирĕн партин çывăхри задачисенчен пĕри.*

Йертсе пыма пĕлесси—пысăк ĕç. Йухăмран йулса пыма йурамасť, мĕншĕн тесен йулни массăран уйăрăлнине пĕлтерет. Анчах, ытла малала иртсе кайма та йурамасť, мĕншĕн тесен ытла мала иртсе кайни массăпа çыхăнса тăрассине çухатнине пĕлтерет. Кам та кам кĕрешĕве йертсе пырас тет, унпа пĕрлех мĕлйунлă массăсемпе те тачă çыхăнса тăрас тет, çав икĕ фронтпа—йулса пыраканнисемпе те, ытла мала иртсе кайаканнисемпе те кĕрешсе пымала.

Пирĕн парти йухăма йертсе пынипе пĕрлех мĕлйунлă массăсемпе те çыхăну тытса пыма, ăна вăйлатма пултарнипе никам çĕнтерейми йех вăйлă та ĕнтĕ.

*„Правда" № 60*
*1930 ç. 2 март.*

# КУЛАКСЕН КЛАСНЕ ПĔТЕРЕС ПОЛИТИКĂ ÇИНЧЕН ХУСКАТНĂ ЫЙТУ ПИРКИ

„Хĕрлĕ çалтăр“ хаçатăн 16-мĕш номĕрĕнче „Кулаксен класне пĕтересси“ йатлă, пĕтĕмĕшпе илсен тĕрĕс статйара, икĕ тĕрĕс мар каланă вырăн пур. Ман шутпала вăл вырăнсене тӳрлетмеле.

1. Статйара каланă:

> „Хуçалăха хăпартнă тапхăрта епĕр хулапа йалти капиталисла елементсене пӳлсе пырас политикă тытса пынă. Реконструкци тапхăрĕ пуçлансан епĕр пӳлсе пырас политикăран вĕсене хĕссе кăларса пырас политикă (политика вытеснения) çине куçрăмăр“, тенĕ.

Кун пек калани тĕрĕс мар. Капиталисла елементсене пӳлсе пырас политикăпа вĕсене хĕссе кăларса пырас политикă вăл—икĕ ăрасна политикă мар. Вĕсем иккĕшĕ те пĕр политиках: Йалти капиталисла елементсене хĕссе кăларса пыни вăл—капиталисла елементсене пӳлсе пырас политикăран, кулаксен експлоататăрлă туртăмне пӳлсе пырас политикăран пур пĕрех тухса тăракан политикă, унăн *уйрăлми* пайĕ пулса тăрать. Йалти капиталисла *елементсене* хĕссе кăларни вăл—кулаксен *класне* хĕссе кăларни пулмастĕ ха. Йалти капиталисла елементсене хĕссе кăларни вăл—кулаксен *уйрăм отречĕсене*, налог йăвăрлăхне чăтайман, совет влаçĕн пур пӳлсе пыракан ĕçĕсене чăтайман *уйрăм отречĕсене* хĕссе кăларни, çĕнтерсе пыни пулать. Паллах, кулаксен експлоататăрлă туртăмне пӳлсе пырас политикă, йалти капиталисла елементсене пӳлсе пырас политикă кулаксен уйрăм отречĕсене хĕссе кăларасси патне илсе пымасăр пулма пултараймасть. Çавăнпа та кулаксен уйрăм отречĕсене хĕссе кăларни вăл—йалăн капиталисла елеменчĕсене пӳлсе пырас политикăран пур пĕрех тухса тăракан политикă, унăн уйăрăлми пайĕ пулса тăрать.

Ҫак политикӑна епӗр хуҫалӑха хӑпартнӑ тапхӑрта анчах мар, реконструкци тапхӑрӗнче те, пирӗн партин XV сиесӗ (1927 ҫ. декабӗр) хыҫҫӑнхи тапхӑрта та, XVI конференци (1929 ҫ. апрел) тапхӑрӗнче те, ҫак конференци иртсен те 1929 ҫулхи ҫулаччен—пирӗн талккӑшпех коллективлас йухӑм тапранса кайаччен, кулаксен *класне пӗтерес* политикӑ ҫине куҫас тапхӑр пуҫланаччен, тытса пынӑ.

Партин чи паллӑрах докумӗнчӗсене, 1925 ҫулти декабӗрте пулнӑ XIV сиесран та пулин пуҫласа (Тӗп Комитет отчочӗ тӑрӑх йышӑннӑ резолуцийе вула), 1929 ҫулхи апрелте пулса иртнӗ XVI конференцийе ҫитиччен („Йалхуҫалӑхне хӑпартас ҫулсем“ ҫинчен йышӑннӑ резолуцийе вула) пӑхса тухсан та, унта „кулаксен експлоататӑрла туртӑмне пӳлсе пырасси“ ҫинчен йе „йалта капиталисӑм ӳсӗмне пӳлсе пырасси“ ҫинчен калакан тезис йаланах „йалти капиталисла елементсене хӗссе кӑларса пырасси“ ҫинчен, „йалти капиталисла елементсене ҫӗнтерсе пырасси“ ҫинчен калакан тезиспа *йунашар* пынине асӑрхамасӑр иртме ҫук.

Мӗне пӗлтерет-ха ҫак?

Ҫак вӑл—пирӗн парти йалти капиталисла елементсене хӗссе кӑларса пырас политикӑна кулаксен експлоататӑрла туртӑмне пӳлсе пырас политикӑран, йалти капиталисла елементсене пӳлсе пырас политикӑран уйӑрса тӑратманнине пӗлтерет.

Партин XV сиесӗ, XVI конференци пекех, пӗтӗмпех „йалхуҫалӑхӗнчи буржуазин експлоататӑрла туртӑмӗсене пӳлсе пырас“ политикӑшӑн тӑрать (XV сиесӑн „Йалта ӗҫлесси ҫинчен“ йышӑннӑ резолуцийӗ); „йалта капиталисӑм ӳснине пӳлсе пырас тӗлӗшпе ҫӗнӗ мелсем йышӑнас“ политикӑшӑн тӑрать (ҫав резолуцийех); „кулаксен експлоататӑрла туртӑмӗсене хыттӑн пӳлсе пырас“ политикӑшӑн тӑрать (XV сиесӑн петилеткӑ ҫинчен йышӑннӑ резолуцийӗ); „кулак ҫине наступлени тӑвас“, „кулакпа частнике хытӑрах, йаланах, ҫине тӑрарах пӳлсе пырас“ политикӑшӑн тӑрать (ҫав резолуцийех); хулара та, йалта та „уйрӑм-капиталисла хуҫалӑхсене“ „тата та хытӑрах хӗссе кӑларса пырас“ политикӑшӑн тӑрать (XV сиесӑн ТК отчочӗ тӑрӑх йышӑннӑ резолуци).

Çапла вара, а) асăннă статйа автăрĕ капиталисла елементсене пўлсе пырас политикăпа вĕсене хĕссе кăларас политикăна—икĕ тĕрлĕ, расна политикă пек кăтартса пани тĕрĕс мар. Чăннипе кунта епĕр капиталисăма пўлсе пырас пĕртен пĕр политикă çеç пуррине куратпăр, кулаксен уйрăм отречĕсене хĕссе кăларса пыни çак политикăн уйрăлми пайĕ, унăн йулашки тапхăрĕ (резуљтачĕ) пулаť. Çак тĕрĕссине пурнăçри ĕçсем кăтартаççĕ.

Çапла вара, б) асăннă статйа автăрĕ йалти капиталисла елементсене хĕссе кăларма тытăнни реконструкци тапхăрĕнче, XV сйес хыççăн тин пуçланчĕ, тени те тĕрĕс мар. Чăннипе кулаксен уйрăм отречĕсене хĕссе кăларни XV сйесчен те—хуçалăха хăпартнă тапхăрта, XV сйес хыççăн та—реконструкци тапхăрĕнче, пулнă. Партин XV сйесĕ пулнă тапхăрта кулаксен експлоататăрла туртăмне пўлсе пырас политика çĕнĕ мелсемпе вăйлатнă çеç, çав майпа вара кулаксен уйрăм отречĕсене хĕссе кăларасси те вăйланмала пулнă.

2. Статйара каланă:

> „Кулаксен класне пĕтерес политикă пĕтĕмĕшпех капиталисла елементсене хĕссе кăларас политикăран тухса тăраť, вăл çав хĕссе кăларас политиках çĕнĕ тапхăрта малала тытса пыни пулаť“, тенĕ.

Кунашкал калани тĕрĕс мар, çавăнпа та йанăш. Паллах, кулаксен класне пĕтерес политикă пĕлĕт çинчен татăлса анма пултарайман. Ăна пĕтĕм иртнĕ тапхăр — йалти капиталисла елементсене пўлсе пырас, апла пулсан, вĕсене хĕссе кăларас политика тытса пынă тапхăр хатĕрлесе çитернĕ. Анчах апла пулин те, çак политикă йалти капиталисла елементсене пўлсе пырас (тата хĕссе кăларас, политикăран *тĕпренех* уйрăм маррине пĕлтермест, вăл çак пўлсе пырас политикăнах малала чăсса пынине пĕлтермест. Пирĕн автăр каланă пек калани вăл вара—1929 çулхи çулларан пуçласа йал аталанăвĕнче *пысăк улшăну* пулнине йышăнманни пулаť. Çапла калани вăл вара—çак тапхăрта епĕр партин йалти политикинче *улшăну* тунине йышăнманни пулаť. Çапла калани вăл вара—хăй вăхăтĕнче Фрумкин йулташ колхозсемпе совхозсем тăвас политика хирĕç XIV сйес решенийĕсен-

чен ҫӑлса тытма хӑтланнӑ пекех, партин *ҫӗнӗ* политикине хирӗҫ XV сиес решенийӗсенчен ҫӑлса тытма хӑтланакан сылтӑм елементсем ваҕҕи идеологилӗ пӗркенчӗк туни пулаҭ.

Капиталисла елементсене пӳлсе пырас (тата хӗссе кӑларас) политикӑна вӑйлатмала тунӑ чухне XV сиес мӗне асра тытса ҫапла тумала тунӑ-ха? Кулаксене ҫапла пӳлсе пырсан та, кулаксен *класӗ ҫапах та* вӑхӑтлӑха *йулмалине* асра тытса. *Ҫакна асра тытнипе* ӗнтӗ XV сиес ҫӗре тара парасси ҫинчен калакан саккуна, тара илекенсем пӗтӗмпе пекех кулаксем пулнине пит те аван пӗлсе тӑнӑ ҫинчех, пӗтермесӗр хӑварчӗ. *Ҫакна асра тытнипе* ӗнтӗ XV сиес йалта тара тытса ӗҫлеттермели ҫинчен калакан саккуна пӗтермерӗ, ӑна пурнӑҫа пӗр пӑрӑнмасӑр кӗртсе пыма хушса хӑварчӗ. *Ҫакна асра тытнипе* ӗнтӗ кулаксене салатма (раскулачиваҭ тума) йураманнине тепӗр хут ҫирӗплетсе хӑварчӗ. Ҫак саккунсемпе постановленисем йалти капиталисла елементсене *пӳлсе пырас* (тата хӗссе кӑларас) политика хирӗҫ пыраҫҫи? *Ҫук*, нийепле те хирӗҫ пымаҫҫӗ. Ҫак саккунсемпе постановленисем кулаксен класне *пӗтерес* политика хирӗҫ пыраҫҫи? Паллах, *хирӗҫ пыраҫҫӗ!* Ҫапла ӗнтӗ, талккӑшпех колхозланса пыракан районсенче (ун пек вырӑнсем кунсерен мар, сехетсеренех ӳссе пыраҫҫӗ) ҫав саккунсемпе постановленисене хаҕ ал айӗнчен айаккала илсе хума тивет. Чӑннипе каласан, талккӑшпех колхозланса пыракан районсенче колхоз йухӑмӗ хӑйех ку саккунсене айаккала илсе хунӑ.

Ҫакӑн хыҫҫӑн кулаксене класӗпех пӗтерес политикӑ йалти капиталисла елементсене пӳлсе пырас (тата хӗссе кӑларас) политикӑн *малалли утӑмех* пулса тӑраҭ, тесе, калама йураҭ-и ӗнтӗ? Паллах, йурамасҭ.

Асӑннӑ статйа автӑрӗ—кулаксен класӗ аллинче производствӑ хатӗрӗсене ҫӗрпе ирӗккӗн усӑ курас правӑпа пӗрле *хӑварсан* тата йалта тара тытса ӗҫлеме, ҫӗре тара пама ирӗк паракан, кулаксене салатма чаракан саккунсене *ҫаплипех хӑварсан*,—кулаксене налогсемпе тата ытти пур тӗрлӗ пӳлсе пыракан мелсемпе хӗссе кӑларма май ҫуккине манаҭ. Автӑр кулаксен есплоататӑрлӑ туртӑмӗсене пӳлсе пырас политикӑна тытса пынӑ чухне кулаксен уйрӑм отречӗ-

сене кӑна хӗссе кӑлارма май пуррине манаҫ; кулаксен уйрӑм отречӗсене хӗссе кӑларни вӑл—кулаксен класӗ вӑхӑтлӑха *йулассине* хирӗҫлемест, пачах урӑхла—ҫакна пӗлтерет те вӑл. Кулаксен класне пӗтерес тесен, вӗсен уйрӑм отречӗсене пӳлсе пырас тата хӗссе кӑларас политикӑ ҫеҫ ҫителӗклӗ мар. Кулаксен класне пӗтерес тесен, ҫак клас хирӗҫтӑнине усӑ ҫапӑҫура *ҫӗмӗрсе тӑкмала*, ӑна пурӑнмали тата ӳссе пымали производствӑ тымарӗсене (ҫӗрпе ирӗккӗн усӑ курассине, ӗҫ хатӗрӗсене, ҫӗр тара илессине, тара тытса ӗҫлеттерессине т. ыт. те) *пӗтерсе хумала*. Ҫак пулаҫ те ӗнтӗ кулаксен класне пӗтермели политикӑ ҫине *куҫни*. Унсӑрӑн кулаксен класне хӗссе кӑларас, тесе калаҫнисем вӑл—пустуй сӑмах ҫеҫ, вӑл сылтӑм сулӑнчӑкрисемшӗн ҫеҫ кӑмӑллӑ, усӑлӑ йапала. Унсӑрӑн йала чӑнласах коллективласси ҫинчен, талккӑшпех ушкӑнлӑ хуҫалӑх йӗрки ҫине куҫасси ҫинчен пушшех те—шутламали те ҫук. Талккӑшпех колхоз ҫулӗ ҫине тӑрса, кулаксене ҫӗмӗрсе пыракан чухӑнсемпе вӑтам хресченсем ҫакна лайӑх ӑнланса илнӗ. Анчах ҫакна пирӗн хӑшпӗр йулташсем халӗ те ӑнланса ҫитеймен пулас-ха.

Ҫапла ӗнтӗ, партин йалти хальхи политики ӗлӗкхи политикӑна малала *чӑсни* мар, йалӑн капиталисла елеменчӗсене *пӳлсе пырас* (тата хӗссе кӑларас) кивӗ политикӑран кулаксен класне *пӗтерес* ҫӗнӗ политикӑ патне *ҫаврӑнни* пулса тӑраҫ.

*„Красная звезда“ № 18*

*1930 ҫ. 21 йанвар.*

# КОЛХОЗНИК ЙУЛТАШСЕНЕ ПАНӐ ОТВЕТ

Хаҫатсем тӑрӑх паллӑ, Сталинӑн „Ҫитӗнӳсем пирки пуҫҫаврӑнни" йатлӑ статйипе Тӗп Комитетӑн „Колхоз йухӑмӗнче парти ҫулйӗрне пӑснисене хирӗҫ кӗрешесси ҫинчен" кӑларнӑ постановленийӗ колхоз йухӑмӗнче ӗҫлекенсем хушшинче нумай ыйту хускатрӗҫ. Ҫаксен пирки епӗ йулашки вӑхӑтра колхозник йулташсенчен нумай ҫыру илтӗм, вӗсем унта тапратнӑ ыйтусем ҫине ответ пама ыйтаҫҫӗ. Манӑн вӑл ҫырусене хирӗҫ уйрӑм ҫырусем ҫырса ответ памалаччӗ. Анчах кунашкал тума май килмерӗ, мӗншӗн тесен, ҫыракансенчен ҫурри ытла хӑйсен адрӗсне кӑтартман (адрӗсне пӗлтерменнӗ). Ҫав вӑхӑтрах, ҫырусенче хускатнӑ ыйтусем пирӗн йулташсемшӗн пуриншӗн те политикӑйенчен пит пысӑк интереслӗ. Кунсӑр пуҫне, паллах ӗнтӗ, епӗ хӑйсен адрӗсне пӗлтерменнӗ йулташсене те ответ памасӑр хӑварма пултараймастӑп. Ҫақсем пирки манӑн, колхозник йулташсен ҫырӑвӗсенчи ӗҫре кирлӗ ыйтусене илсе, пичетре, уҫӑ ответ памала пулчӗ. Ку тӗлӗшпе Тӗп Комитет мана тӳрех хушни те пулнӑ пирки епӗ ҫак ӗҫе тума ухатапах тытӑнтӑм.

*Пӗрремӗш ыйту.* Хресчен ыйтӑвӗнчи йӑнӑшсен тымарӗ ӑҫта вӑл?

*Ответ.* Вӑтам хресчен ҫине тӗрӗс пӑхманнинче. Хуҫалӑх тӗлӗшпе вӑтам хресчене ирӗксӗрлленисем пулнинче. Вӑтам хресчен массисемпе хуҫалӑхлӑ ҫыхӑну тытса пырас ӗҫе вӗсене ирӗксӗрлесе хӑтланнипе мар, вӑтам хресченпе килӗшсе, вӑтам хресченпе сойуз туса тытса пымалине манса кайнинче. Колхоз йухӑмӗн вӑй хӑвачӗ хаҗхи вӑхӑтра рабочи класпа чухӑнсем вӑтам хресченсемпе пӗрле кӑпиталисӑма хирӗҫ, пуринчен ытла кулаксене хирӗҫ тунӑ сойузра пулса тӑнине манса кайнинче.

Кулаксене хирĕç вăтам хресченсемпе пĕрле пĕр фронт тытса пырса наступлени тунă чухне пурте аван пыраччĕ. Анчах пирĕн хăшпĕр йулташсем, çитĕнӳсене кура ӳсĕрĕлсе кайнăскерсем, сисмесĕрех кулак çине наступлени тăвас çулран пăрăнса, вăтам хресчене хирĕç кĕрешес çул çине тăма пуçласан, вĕсем колхоза ытларах кĕртес тесе вăтам хресчене сасăсăр хăварса, „кулак" ятăнне хурса, пурлăхне туртса илсе, ирĕксĕрлеме пуçласан,—наступлени пăсăлма тапратрĕ, вăтам хресченпе пĕр фронт тытса пыни вăйсăрланма пуçларĕ, вара, паллах, кулак каллех ураланма май тупрĕ.

Хамăр клас тăшманĕсемпе кĕрешнĕ çĕрте ирĕксĕрлени кирлĕ те, усăлă та иккенне, анчах пирĕн сойузник пулса тăракан вăтам хресченпе çавнашкал хăтланни йурăхсăр та, хăрушă та иккенне манса кайнă.

Вăрçă ĕçĕн задачисене тунă чухне углă çар пек хăвăрт тапăнса илни кирлĕ те, усăлă та иккенне, анчах вăтам хресченпе сойуз туса колхоз тунă çĕрте унашкал хăтланни йурăхсăр та, хăрушă та иккенне манса кайнă.

Çакăнта ĕнтĕ хресчен ыйтăвĕнчи йăнăшсен тымарĕ.

Акă мĕн каланă Ленин вăтам хресченпе хуçалăх тĕлĕшпе мĕнле çыхăнса тăмали çинчен:

„Пуринчен ытла пирĕн çак чăнлăха никĕсе хумала: ирĕксĕрленипе кунта нимĕн те тума çук. Кунта економикă задачи йăлтах урăхла тăрат. Кунта пĕтĕм никĕсне, пĕтĕм çуртне çаплипех хăварса тăррине çеç касса пăрахмали тăррийĕ çук. Хулари капиталиссем йышши çийелти сий кунта çук. *Кунта ирĕксĕрлеме хăтланни — пĕтĕм ĕçе пĕтерме пултарат... Вăтам хресчене хуçалăх çыхăнăвĕ тĕлĕшпе ирĕксĕрлесси çинчен шутланинчен ытла айванни урăх нимĕн те çук*" (т. XXIV, стр. 168).

Малала:

„*Вăтам хресчене ирĕксĕрлени калама çук пысăк сийен.* Вăтам хресченсен сийĕ нумай йышлă, нумай мĕлйунлă. Европăра та,—унта вăл нихăçан та пирĕн патăрти пек пысăк вăй пулайман, унта техникăпа культура, хула пурнăçĕ, чугун-çулсем пит мала кайнă пулин те, унта çавăн çинчен пуринчен те çăмăлрах шутлама пулат пулин те,—революцилĕ социалиссенчен пĕри те нихăçан та вăтам хресченсене ирĕксĕрлесси çинчен сăмах тапратман" (т. XXIV, стр. 167).

Ăнланмала, пулас.

*Иккĕмĕш ыйту.* Колхоз йухăмĕнчи тĕп йăнăшсем мĕнле?

*Ответ.* Вăл йăнăшсем сахалтан та виççĕ.

1) Ленинăн—колхозсене харпăрхăй ирĕкĕпе кĕрекенсенчен тумала текен принципне пăснă. Колхозсене харпăрхăй ирĕкĕпе кĕрекенсенчен тумала, тесе калакан партин тĕп кăтартăвĕсемпе йалхуçалăх ертелĕн примерлă уставне пăснă.

Ленинисăм вĕрентнĕ тăрăх, хресченсене колхоз çулĕ çине ирĕккĕн, пĕрлешӳлĕ, коллективлă хуçалăх уйрăм хуçалăхран усăлăраххине ĕнентерсе панипе куçарса пымала. Ленинисăм вĕрентнĕ тăрăх, хресченсене коллективлă хуçалăх усăлăраххине ĕнентерсе пама, колхоз уйрăм хуçалăхран лайăхраххине, усăлăраххине, колхоз хресчене, чухăнпа вăтама, нушапа чухăнлăхран тухма май панине ĕçпе, опăтпа кăтартса, туса парсан анчах пулаť. Ленинисăм вĕрентнĕ тăрăх, çак условисене асра тытса тумасан колхозсем çирĕп пулма пултараймаççĕ. Ленинисăм вĕрентнĕ тăрăх, колхоз йĕркине вăйпа, ирĕксĕр йышăнтарма хăтланни, ирĕксĕрлесе колхозсем лартса тухма хăтланни сийен кăна кӳме пултараť, вăл хресченсене колхоз йухăмĕнчен пистерме анчах пултараť.

Чăнах та вара, çак тĕп кăтартăва тĕрĕс тытса пынă чухне колхоз йухăмĕнче çитĕнӳ хыççăн çитĕнӳ пулса пыраťчĕ. Анчах пирĕн хăшпĕр йулташсем, çитĕнӳсене кура ӳсĕрĕлсе кайнă пирки, çак кăтартăва хăйне тивĕç хак пама пăрахрĕç, ытлашши васкама тытăнчĕç, вара колхозсене ытларах кĕртме васканипе, ирĕксĕрлесех колхозсем туса лартма пуçларĕç. Çакнашкал „политикăран" ăнăççăр ĕçсем часах палăрнинчен нимĕн тĕлĕнмели те çук. Васкавлă пулнă колхозсем мĕнле хăвăрт пулнă, çавăн пекех хăвăрт ирĕлсе пĕтме пуçларĕç, вак хресченсен пĕр пайĕ, ĕнер колхоз çине пысăк шанчăкпа пăхаканскер, унран пăрăнма пуçларĕ.

Çакăнта ĕнтĕ колхоз йухăмĕнчи пĕрремĕш чи пысăк йăнăш. Акă мĕн калаť Ленин колхозсене ирĕккĕн тăвасси çинчен:

„Пирĕн хаљхи задачă—çĕре пĕрлешсе ĕçлеме тытăнасси, шултра пĕрлешӳлĕ хуçалăх çине куçасси. Анчах совет влаçĕ йенчен нимĕнле ирĕксĕрлени те пулмала мар: нимĕнле саккун та çакна тума ирĕксĕрлемест. Йалхуçалăх коммунĕ ирĕклĕн йĕркеленсе кайаť, çĕре пĕрлешсе ĕçлесси çине ирĕккĕн анчах куçмала пулаť. Ку тĕлĕшпе рабочипе хресчен правительстви йенчен нимĕнле ирĕксĕрлени

те пулма пултараймасӗ, саккун ҫакна тума ирӗк памасӗ. Сиртен кам та пулин унашкал ирӗксӗрленине сӑнанӑ пулсан, есӗр ҫакна пӗлмеле: ку йурӑхсӑр ӗҫ, саккуна пӑсни пулаӗ, вӑл йанӑшсеве епӗр тӳрлетме тӑрӑшатпӑр, малала та тӳрлетсе пырӑпӑр" (т. XXIV, стр. 43).

Малала:

„Хресченсене ҫӗре пӗрлешсе, коллективлӑ, йулташлӑ, ертелпе ӗҫлени лайӑхраххине *ӗҫре кӑтартсан* ҫеҫ, хресчене йулташлӑ, ертеллӗ хуҫалӑх туса пулӑшсан ҫеҫ,—патшалӑх влаҫне хӑй аллинче тытса тӑракан рабочи клас хресчене хӑйӗн тӗрӗслӗхне кӑтартма пултараӗ. Нумай мӗлйунлӑ хресченсен массине чӑннипех, ҫирӗппӗн, хӑй йенне ҫавӑрма пултараӗ. Ҫавӑнпа та ҫӗр ӗҫне йулташлӑ ертелпе тума вӗрентес ҫӗрте тӗрлӗ предприйатисем тӑвассине хӑйне тивӗҫҫинчен ытлашши хак памала мар. Пирӗн тӗттӗм кӗтесри йалсенче мӗлйуншар сапаланчӑк, вакӑ уйрӑм хуҫалӑхсем пур... Йулташлӑ, ертеллӗ ҫӗр ӗҫне куҫма кирлине, вӑл усӑллине хресченсене *ӗҫре, опӑтра кӑтартса парсан* ҫеҫ епӗр, ҫав Раҫҫей пек нумай хресченлӗ пысӑк ҫӗршывра ҫӗре социалисӑмлӑ майпа ӗҫлес ҫул ҫинче пысӑк утӑм тунӑ, теме пултаратпӑр" (т. XXIV, стр. 579—580).

Йулашкинчен, Ленин ҫырнисенчен татах тепӗр вырӑн:

„Вӑтам хресченсен тӗрлӗ йулташлӑхӗсене, йалхуҫалӑх коммунӗсене тума пулӑшса, совет влаҫӗн представителӗсен ҫаксене тунӑ ҫӗрте кӑшт та *ирӗксӗрлесе* ӗҫлемеле мар. Хресченсем хӑйсен ирӗкӗпе пуҫарса йарса, ӗҫре тӗрӗслесе пынӑ хыҫҫӑн уссине курнӑ пӗрлешӳсем анчах паха. *Ку ӗҫре ытла васкани сийенлӗ,* мӗншӗн тесен апла туни вӑтам хресченсен ҫӗнӗ йапалана йуратсах кайман шухӑшне вӑйлатма ҫеҫ пултараӗ. Совет влаҫӗн хӑшпӗр ҫыннисем ҫавнашкал коммуна кӗртес сӑлтавпа тӳрех мар, айакран ирӗксӗрлеҫҫӗ пулсан та вӗсене хытӑ ответ тыттармала, йалти ӗҫрен кӑлармала"* (т. XXIV, стр. 174).

Ӑнланмала, пулас.

Ҫак Ленин кӑтартнисене парти пурнӑҫа ҫирӗппӗн кӗртсе пырассине йатарласах кӑтартса пама кирлех те мар пулӗ.

2) Ленин колхоз тӑвас ӗҫре Совет сойузӗн тӗрлӗ районсенчи уйрӑмлӑхсене шута илмеле тенине пӑснӑ. Совет республикинче тӗрлӗ вырӑнсенче тӗрлӗ економикӑлӑ йӗркепе тӗрлӗ кулҭурлӑх пуррине манса кайнӑ. Тӗрлӗ облӑҫсем хушшинче малта пыраканнисем, вӑтаммисем тата кайа йулнисем пуррине манса кайнӑ. Ҫак пӗр-перинчен уйрӑм тӑракан облӑҫсенче колхоз йухӑмӗн хӑвӑртлӑхӗсемпе майӗсем те *пӗр пек пулма пултарайманнине* манса кайнӑ.

---

* Курҫив манӑн. *И. Ст.*

„Раççейри пУр вырăнсем ваљљи те,—тет Ленин,—епĕр пĕр йышши декретсем çырма пуçласан, сăмахран, Украйнăпа Донри бољшевиксем-коммуниссем, унти совет ĕçлекенĕсем вăл декретсене шутласа пăхмасăрах ытти облăçсене те сарсан... вăл йăнăш пулнă пулĕччĕ"... мĕншĕн тесен „епĕр хамăра нийепле те пĕр калăпа виçипе çыхса хумастпăр, пирĕн опăта, тĕп Раççейри опăта çаплипех ытти вырăнсене те куçарма йурăт, тесе йаланлăхах татса хумастпăр" (т. XXIV, стр. 125—126).

Ленин малала çапла калаť:

„Тĕп Раççейе, Украйнăна, Çĕпĕре пĕр калăппа виçсе ĕçленин калама çук пысăк айванлăх" тет (XXVI, стр. 243).

Йулашкинчен, Ленин Кавказри йулташсене—

„хăйсен республикисен условийĕсем Раççейри федерацилĕ республикăн условийĕсенчен уйрăммине ăнланса илме, пирĕн тактикăна çаплипех çырса илме мар, вырăнти условисене кура ăна тĕплĕн улăштарса пыма вĕренччĕр", тесе хушаť (т. XXVI, стр. 191).

Ăнланмала, пулас.

Çак Ленин кăтартнисене асра тытса, пирĕн партин Тĕп Комитечĕ хăйĕн „Коллективизаци ĕçĕн хăвăртлăхĕ çинчен" йышăннă постановленийĕнче (1930 ç. 6-мĕш йанварте тухнă „Правда" хаçата пăх) Совет республикине колхоз йухăмĕн хăвăртлăхĕ йенчен пăхса виçĕ ушкăна уйăрчĕ. Вĕсенчен Çурçĕр Кавказ, Вăтам Атăл тата Анатри Атăл коллективизаци ĕçне пĕтĕмĕшпе илсен 1931 çулта çуркунне туса пĕтерме пултараççĕ, ытти тыр тăвакан облăççем (Украинă, Тĕп Хураçĕр облăçĕ, Çĕпĕр, Урал, Казакстан т. ыт. те) коллективизацийе 1932 çулта çуркунне туса çитерме пултараççĕ, ытти облăççем коллективизацийе петилеткă пĕтиччен, 1933-мĕш çулччен тăсма пултараççĕ,—тенĕччĕ çак постановленире.

Ăнланмала, пулас.

Анчах ĕçре мĕн пулчĕ? Колхоз йухăмĕнчи малтанхи çитĕнÿсене кура ытла хĕпĕртенипе хăшпĕр йулташсем Ленин кăтартнисене те, Тĕпком постановленине те чиперех манса кайнă. Мускав облăçĕ, сивчир тытса лăканă пек васкаса, колхоза кĕнисен процентне пысăкран-пысăк тăвас шутпа—коллективизаци ĕçне 1930 çулхи çуркунне тĕлнеле туса пĕтерме çул тытнă, хăйĕн срукĕ виçĕ çултан кайа пулман (1932 çулăн вĕçĕ), Тĕп Хураçĕр облăçĕ „ыттисенчен

йулас мар". тесе 1930 çул варинеле коллективизаци туса пĕтермеле, тесе вĕрентнĕ, хăйĕн срукĕ икĕ çултан кайа мар пулнă (1931 çулăн вĕçĕ), Лешйен Кавказпа Туркестанри йулташсем вара малта пыракан районсене „хăваласа çитсе иртсе кайас" шутпа коллективизаци ĕçне „кĕске срукрах" туса пĕтермеле тесе вĕрентнĕ, хăйсен срукĕ шăп 4 çул пулнă (1933-мĕш çул вĕçнеле). Паллах, колхоз йухăмне сарса йама сахалрах хатĕрленнĕ районсем çакăн пек васкаса, ытларах хатĕрленнĕ районсенчен „иртсе кайас". шутпа административлă майсемпе хĕсме пуçланă, колхоз тума çитмен хатĕрсем выранне административлă вĕриленсе ĕçлеме пикеннĕ. Кун пек тунинчен мĕн пулни паллах. Çак облăçсенче ĕç йепле арпашса кайнине пурте пĕлеççĕ, вăл арпашусене вара Тĕп Комитетăн йусамала пулчĕ.

Çакăнта ĕнтĕ колхоз йухăмĕнчи иккĕмĕш йăнăш.

3) Колхоз тăвас ĕçре Ленинăн: йухăмăн çирĕпленсе йулман форми урлă сиксе кайма йурамасť, текен тĕп шухăшне (принципа) пăснă. Ленинăн: массă аталанса пынинчен иртсе каймала мар, массă йухăмне декретпа туса пымала мар, массăран уйăрălса каймала мар, массăпа пĕрле пырса ăна малала шутармала, пирĕн лозунгсем патне илсе пырса, вĕсем тĕрĕссине массăна ĕçре сăнаса пăхса ăнланса илме пулăшмала,—тесе вĕрентекен тĕп шухăша пăснă.

> „Питĕрти пролетарисемпе унти гарнизонти салтаксем влаçа туртса илнĕ чухне,—тет Ленин,—йалта ĕçленĕ çĕрте нумай йăвăрлăхсем пулассине питĕ аван пĕлсе тăнă, вĕсем кунта майпентерех пымалине, кунта *çĕре пĕрлешсе ĕçлессине* декретсемпе тума хăтланни *калама çук пысăк йăнăш* пулассине, çапла тума сахал хресченсем çеç килĕшессине, хресченсен нумайăшĕ унпа килĕшес çуккине пит лайăх курса тăнă. Çавăнпа та епĕр революцийе ўстерсе пырас çĕрте чи кирлĕ ĕçсене тунипе анчах чарăнса пытăмăр: *кирек мĕнле пулсан та массă аталанса пынинчен иртсе каймасăр,* çав массă хăй ĕçре туса сăнаса пынинченех, çав массă кĕрешĕвĕнченех йухăм малала ўссе кайасса кĕтсе илмеле*) (т. XXIII. стр. 252).

Çак Ленин кăтартнисене асра тытса, Тĕп Комитет „Коллективизаци ĕçĕн хăвăртлăхĕ çинчен" йышăннă постановленире (1930 ç. 6-мĕш йанварте тухнă „Правдăна" пăх) çапла

*) Курçив манăн. *И. Ст.*

калаŋӑ: 1) хаљхи вӑхӑтра колхоз йухӑмӗнчи тӗп формӑ йалхуҫалӑх ертелӗ пулаť, 2) ҫавӑн пирки колхоз йухӑмӗнче тӗп формӑ пулса тӑракан йалхуҫалӑх ертелӗн примерлӑ уставне хатӗрлемеле, 3) колхоз йухӑмне ҫӳлтен „декрет ҫырнипе" тумала мар, „коллективизаци ӗҫне вӑйӑла тумала мар", тенӗ.

Ку акӑ мӗне пӗлтерет: хаљ пирӗн коммунӑсем тӑвас ҫулпа мар, колхоз йухӑмӗн тӗп форми пулса тӑракан йалхуҫалӑх ертелӗсем тӑвас ҫулпа пымала, йалхуҫалӑх ертелӗ урлӑ сиксе каҫса коммунӑ тумала мар, хресченсем колхоз йенеле массӑлӑн туртӑннине колхозсене „декрет тӑрӑх" тунипе, „колхоз тумала выљанипе" улӑштармала мар.

Ӑнланмала, пулас.

Анчах ӗҫре мӗн пулчӗ? Пирӗн хӑшпӗр йулташсем, колхоз йухӑмӗнчи малтанхи ҫитӗнӳсемпе ӳсӗрӗлсе кайса, Ленин кӑтартнине те, Тӗпком постановленине те чиперех манса кайнӑ. Йалхуҫалӑх ертелӗшӗн массӑлӑ йухӑм организацилес вырӑнне ҫав йулташсем уйрӑм хресченсене тӳрех коммунӑ уставӗ ҫине „куҫарма" пуҫланӑ. Ертел тӑвассишӗн пыракан йухӑма ҫирӗплетес вырӑнне ирӗксӗрлесех вак выљӑхсене, кайӑк-кӗшӗксене, тавар паман сӗт выљӑхӗсене, пурнакан ҫуртсене „пӗрлештерме" пуҫланӑ. Ҫакнашкал ӗҫленинчен, ленинцӑна тивӗҫлӗ мар васкавлӑ ӗҫленинчен мӗн тухнине хаљ пурте пӗлеҫҫӗ. Пӗтӗмӗшпе илсен, паллах, ҫирӗп коммунӑсем тӑвайман. Анчах чылай йалхуҫалӑх ертелӗсене алӑран вӗҫертсе йанӑ. Чӑнах та, „лайӑх" резолюцисем йулнӑ ӗнтӗ. Анчах мӗн усси пур-ха вӗсенчен?

Ҫакӑнта ӗнтӗ колхоз йухӑмӗнчи виҫҫӗмӗш йӑнӑш.

*Виҫҫӗмӗш ыйту.* Ҫак йӑнӑшсем мӗнле пулма пултарнӑ тата парти вӑл йӑнӑшсене йепле тӳрлетмеле.

*Ответ.* Вӗсем (йӑнӑшсем) пирӗн колхоз йухӑмӗнче ҫитӗнӳсем хӑвӑрт пулнӑ пирки пулчӗҫ. Ҫитӗнӳсем хӑш чухне пуҫа ҫавӑраҫҫӗ. Вӗсем час-часах калама ҫук мӑнкӑмӑллантарса, иртӗнтерсе йараҫҫӗ. Ҫак йапала пуринчен ытларах влаҫа тытса тӑракан парти представителӗсен пулма пултараť. Пуринчен те ытла пирӗнни пек партин пулма пултараť, мӗншӗн тесен унӑн вӑйӗ те, авторитечӗ те виҫесӗр пысӑк. Кунта

коммунисла мăнкăмăлланни часах пулма пултарать; ăна хирĕç Ленин пит хытă кĕрешнĕ. Кунта: декрет, резолюци, хушу пурне те тума пултарнине ĕненни палăрма пултарать. Кунта партин революцилĕ ĕçĕсене пирĕн пысăк çĕршывăн хăшпĕр районĕсенче ĕçлекенсем чинавникле декретсем кăларса хăтланнипе нимĕне тăман пуш ĕç туса хурас хăрушлăх пур. Епĕ кунта вырăнти ĕçлекенсем çинчен çеç каламастăп, облăçсенчи уйрăм ĕçлекенсене те, Тĕпкомăн уйрăм членĕсене те илетĕп. „Коммунисла мăнкăмăлланни вăл,—тет Ленин,—çын партире тăрса, ăна партирен тасатса кăларма ĕлкĕреймендипе, пĕтĕм ĕçсене коммунисла декретсем кăларнипе тума шутлани пулать“ (т. XXVII, стр. 50—51).

Акă мĕн пирки пулса карĕç колхоз йухăмĕнчи йăнăшсем, колхозсене тăвас ĕçре парти çулйĕрне пăснисем.

Çав йăнăшсемпе пăсăксем малала та çаплипех йулсан, вĕсене пит хăвăрт тĕпĕ-йĕрĕпе пĕтермесен мĕнле хăрушлăхсем пулма пултараççĕ?

Хăрушлăх кунта акă ăçта: вĕсем, çав йăнăшсем, пире тÿрех колхоз йухăмне салатса йарасси патне, вăтам хресчене хирĕçесси патне, чухăнсене тĕрĕс çулйĕртен пăрса йарасси патне, хамăрăн ĕретсене пăтраштарса йарасси патне, пирĕн пĕтĕм социалисăм тăвас ĕçе вăйсăрлатасси патне, кулаксене çĕнĕрен тавăрасси патне илсе пыраççĕ. Кĕскен каласан, çав йăнăшсем пире хресченсен тĕп массипе тунă сойуза çирĕплетес çул çинчен, пролетари диктатурине çирĕплетес çул çинчен çав массăпа хирĕçмели çул çине, пролетари диктатурине вăйсăрлатмали çул çине пăрса йама пултараççĕ. Çак хăрушлăх февраль уйăхĕн вĕçнеле палăрчĕ, ун чухне пирĕн йулташсен пĕр пайĕ ун умĕнхи çитĕнÿсене кура суккăрланса, Ленин çулĕнчен пăрăнса сиккипех айаккала чуптарма пуçларĕ. Партин Тĕп Комитечĕ çав хăрушлăха сиссе, çавăнтах вăл ĕçе хутшăнчĕ, иртĕнсе кайнă йулташсене систерме Сталина колхоз йухăмĕ çинчен йатарласах статйа çырма хушрĕ. Хăш-пĕрисем „Çитĕнÿсем пирки пуççаврăнни“ йатлă статйана Сталин хăй пуçăнса çырнă, тесе шутлаççĕ. Ку, паллах, пустуй шухăш. Çакнашкал пысăк ĕçре кама та пулин уйрăм хăй тĕллĕн пуçăнса ĕçлеме ирĕк парать-и вара пирĕн

Тӗпком? Ҫав вӑл Тӗпкомӑн ӗҫе тӗплӗн йӗрлесе тухни пулнӑ. Вара йӑнӑшсен пысӑкӑшӗпе тарӑнӑшӗ паллӑ пулса ҫитсен, Тӗпком ҫак йӑнӑшсене хӑйӗн мӗн пур авторитечӗпе пит хыттӑн ҫапса хуҫма тӑхтаса тӑмарӗ, вӑл хӑйӗн 1930 ҫ. мартӑн 15-мӗшӗнче йышӑннӑ паллӑ постановленине [пичетлесе кӑларчӗ.

Урса кайсах хӑрушӑ шӑтӑк шатнеле вирлӗн вӗҫтерсе пыракансене тытса чарса, тӗрӗс ҫул ҫине ҫавӑрса кӑларма йӑвӑр. Анчах пирӗн Тӗпком ҫавнашкал йӑвӑрлӑхсене ҫеҫ мар ҫӗнтерме вӗреннӗ; ҫавӑнпа та вӑл Ленин партийӗн Тӗп Комитечӗ йатлӑ ӗнтӗ. Вӑл хаљ, пӗтӗмӗшпе илсен, ҫак йӑвӑрлӑхсене ҫӗнтерчӗ те ӗнтӗ.

Ҫавнашкал чухне партин уйрӑм отречӗсене хӑйсен чуппине чарма, вӑхӑтра тӗрӗс ҫул ҫине тухма, пынӑ чухнех хӑйсен ӗретне ҫӗнӗрен йӗркелеме йӑвӑр. Анчах пирӗн парти ҫакнашкал йӑвӑрлӑхсене вӑхӑтра ҫӗнтерме вӗреннӗ, ҫавӑнпа та вӑл Ленин партийӗ йатлӑ та ӗнтӗ. Вӑл хаљ, пӗтӗмӗшпе илсен, ҫак йӑвӑрлӑхсене ҫӗнтерчӗ те ӗнтӗ.

Тӗп ӗҫ кунта хамӑрӑн йӑнӑшсене йышӑнма ҫирӗплӗх тупасси, вӗсене кӗске вӑхӑтрах пӗтерме хамӑрта вӑй тупасси пулса тӑрать. Нумайах пулмасть хамӑрӑн ӗҫсем ӑнӑҫлӑ пулса пынипе хытӑ савӑннӑ хыҫҫӑн хаљ хамӑрӑн йӑнӑшсене йышӑнма хӑрани, хамӑрӑн ӗҫсене тишкӗрме хӑрани, йӑнӑшсене часрах тата татӑклӑн йусама шутламанни—ҫакӑ чи пысӑк йӑвӑрлӑх. Ҫак йӑвӑрлӑха ҫӗнтермеле ҫеҫ, вӗрсе хӑпартнӑ цифрӑлӑ заданисене, кӗнцелерле-бӳрократла хӑтланса пит пысӑк ӑмсаннисене айкинеле сирпӗтмеле ҫеҫ, хамӑрӑн мӗн пур вӑйа колхозсене организаципе хуҫалӑх тӗлӗшпе ҫирӗплетес ӗҫе йамала ҫеҫ—вара ҫав йӑнӑшсенчен йӗрӗ те йулас ҫук. Парти хаљ пӗтӗмӗшпе илсен ҫак хӑрушӑ йӑвӑрлӑха ҫӗнтерчӗ те ӗнтӗ, кун пирки иккӗленмели те ҫук.

„Пӗтӗм революцилӗ партисем,—тет Ленин,—ку таранччен пӗтнисем хӑйсем *мӑнкӑмӑлланса кайса* вӑй ӑҫтине курма пӗлмен пирки, хӑйсен начар йенӗсем *ҫинчен калама хӑранӑ пирки* пӗтнӗ. Епӗр пӗтес ҫук. мӗншӗн тесен хамӑрӑн начар йенсем ҫинчен калама хӑрамастпӑр, вӗсене ҫӗнтерме те вӗренӗпӗр" (XVII т., стр. 260—261)

Ҫак Ленин сӑмахӗсене манма йурамасть.

*Тăватăмĕш ыйту.* Парти çулйĕрне пăсакансене хирĕç кĕрешни, вăл—кайала чакни, отступлени пулмаст-и?

*Ответ.* Паллах, çук. Кайала чакни çинчен кунта—йăнăшсемпе пăсăксене малала та çаплипех туса пынине наступлени вырăнне, йăнăшсемпе кĕрешнине—отступлени вырăнне хуракан çынсем анчах калаçма пултараççĕ. Йăнăшсемпе пăсăксене купалантарса пырса наступлени туни,—мĕн калас ĕнтĕ, лайăх „наступлени".

Епĕр хаљхи вăхăтра колхоз йухăмĕнчи тĕп формă вырăнне йалхуçалăх ертелне кăларса тăратрăмăр. Колхозсем тунă çĕрте çул тытса пыма примерлă устав патăмăр. Кайала чакатпăр-и епĕр çак ĕçрен? Паллах, çук!

Епĕр хаљхи вăхăтра колхоз йухăмĕн тĕп никĕсĕ вырăнне рабочи класпа чухăнсем вăтам хресченсемпе тунă производствăлă смычкăна çирĕплетес ĕçе хутăмăр. Кайала чакатпăр-и епĕр çак ĕçрен? Паллах, çук!

Епĕр хаљхи вăхăтра йалта ĕçлемели тĕп лозунг вырăнне кулаксен класне пĕтермеле текен лозунга кăларса тăратрăмăр. Кайала чакатпăр-и епĕр çак ĕçрен? Паллах, çук!

Епĕр 1930-мĕш çулти йанвар уйăхĕнчех Совет сойузĕнче коллективизацийе йепле хăвăртлăхпа туса пырассине палăртса хутăмăр, С.Р. Сойузĕнчи облăçсене ăрасна ушкăнсене уйăрса, кашни ушкăнне хăйĕн хăвăртлăхне кăтартса патăмăр. Кайала чакатпăр-и епĕр çак ĕçрен? Паллах, çук!

Ăçта-ха кунта парти „кайала чакни?"

Епĕр йăнăшсемпе пăсăксем тăвакан çынсене вĕсем хăйсен йанăшĕсенчен кайала чакчăр тетпĕр. Епĕр пуçа çухатса йурăхсăр ĕçсем тăвакан çынсене çав йурăхсăр ĕçсене тума пăрахтарса, ленинисăм çулĕ çине кăларасшăн. Çаксене тутарасшăнах епĕр, мĕншĕн тесен çаксене тусан çеç епĕр хамăр клас тăшманĕсене хирĕç чăн-чăнах наступлени тума пултаратпăр. Епĕр кайала чакнине пĕлтерет-и çак? Паллах, çук! Ку епĕр пуçа çухатса наступлени тумала выљанине мар, *тĕрĕс* наступлени тума шутланине анчах пĕлтерет.

Партин çакнашкал çулйĕрне кайала чакни вырăнне хурса шутлама тĕрлĕ чудаксемпе „сулахайран" авракансем анчах пултарни паллă мар-и вара?

Кайала чакни ҫинчен лапӑртатакан ҫынсем сахалтан та ҫак икӗ йапалана ӑнланса илеймеҫҫӗ:

1) Вӗсем наступлени саккунӗсене пӗлмеҫҫӗ. Вӗсем кӗрешсе илнӗ позицийе *ҫирӗплетсе пымасӑрах* тӑвакан наступлени пӗтсе ларма пултарнине ӑнланса илеймеҫҫӗ. Сӑмахран, вӑрҫӑ ӗҫне илсен, наступлени хӑҫан ӑнӑҫлӑ пулма пултарать? Ҫынсем шалтан шала кӗрсе пынипе анчах чарӑнса тӑмасан, ҫакӑнпа пӗрле вӗсем туртса илнӗ позицисене *ҫирӗплетме* тӑрӑшсан, ҫӗнӗ вырӑнта вӑй-хӑватсене *ҫӗнӗле вырнаҫтарса* тӑратма, ҫар хыҫӗнчи ӗҫсене ҫирӗплетме, хыҫалти вӑйсене мала илсе пыма тӑрӑшсан. Мӗн тума кирлӗ-ха ҫаксем пурте? Сасартӑк инкек-синкек пуласран сыхланма, уйрӑм йӑнӑшсене тӳрлетме (унашкал йӑнӑшсемсӗр нихӑш наступлени те пулма пултараймасть), ҫапла вара тӑшмана тӗппипех пӗтерес шутпа хатӗрленме кирлӗ. Польшӑ ҫарӗсен 1920-мӗш ҫулти йӑнӑшӗ, ӗҫӗн вӑрҫӑ йенне илсен, вӗсем ҫак правӗлӑсене хисепе хуманнинчен килнӗ. Ҫакӑнтан килнӗ те ӗнтӗ, сӑмахран, вӗсем пит хӑвӑрт Кийӗв патне ҫитсе тӑнӑ хыҫҫӑн ҫавнашкалах хӑвӑрт Варшава ҫитех чакни. Совет ҫарӗсен 1920-мӗш ҫулти йӑнӑшӗ, ӗҫӗн вӑрҫӑ йенне ҫеҫ илсен, вӗсем хӑйсем Варшав ҫине пынӑ чух ҫав польаксен йӑнӑшнех ҫӗнӗрен тунинче.

Клас кӗрешӗвӗ фронтӗнчи наступлени тумали саккунсем ҫинчен те ҫавнах каламала. Клас тӑшманӗсене пӗтерес тесе наступлени тӑвас пулсан, кӗрешсе илнӗ позицисене *ҫирӗплетмесӗр, хамӑр вӑйсене вырнаҫтарса тухмасӑр*, фронта пулӑшма кайри вӑйсене хатӗр тӑратмасӑр, ҫар хыҫӗнчи ӗҫсене йӗркелесе ҫирӗплетмесӗр т. ыт. те ӑнӑҫлӑ наступлени тума ҫук.

Пӗтӗм ӗҫ те кунта—тӑмпуҫсем наступлени саккунӗсене ӑнланса илейменнинче. Пӗтӗм ӗҫ те кунта—парти вӗсене ӑнланса илсе пурнӑҫа кӗртсе пынинче.

2) Вӗсем наступлени класлӑхне ӑнланса илеймеҫҫӗ. Наступлени ҫинчен кӑшкӑраҫҫӗ. Анчах *хӑш клас* ҫине *хӑш класпа* сойуз туса наступлени тумала? Епӗр вӑтам хресченсемпе сойуз туса, йалти капиталисла елементсем ҫине наступлени тӑватпӑр, мӗншӗн тесен ҫакнашкал наступлени анчах пире ҫӗнтерӳ кӳме пултарать. Анчах мӗн тумала-ха, пирӗн партин хӑш-пӗр отречӗсем хӗрсе кайса наступлени тунӑ чух-

не, тĕрĕс çултан шуса тухса, хамăр сойузнике—вăтам хресчене хирĕç çивĕччĕн çаптарма пуçласан? Пире *кирек мĕнле* наступлени те кирлĕ-и-мĕн, паллă клас çине, паллă класпа сойуз туса наступлени туни анчах кирлĕ мар-и? Дон-Кихот текенскер те вĕт хăй армансемпе çапăçнине тăшмансене хирĕç наступлени туни вырăнне шутланă. Анчах пурте пĕлеççĕ, çакнашкал наступлени туса вăл хăйĕн çамкине çеç çĕмĕрсе пĕтерне.

Хăшпĕр „сулахайра" авракансене Дон-Кихот çĕнтерĕвĕсем çывăрма памаççĕ курăнать.

*Иилĕкĕмĕш ыйту.* Хăшĕ пирĕн чи пысăк хăрушлăх—сылтăмми йе „сулахайри?"

*Ответ.* Чи пысăк хăрушлăх пирĕн сылтăмми. Сылтăм хăрушлăх чи пысăк хăрушлăх пулнă, халĕ те çаплипех йулать.

Парти Тĕпкомĕн 1930 çулхи мартăн 15-мĕшĕнче йышăннă постановленире „сулахайрисен" йăнăшĕсем хаљ колхоз йухăмĕнче тĕп чăрмав пулса тăраççĕ, тесе каланине хирĕç пымасть-ши çапла калани? Çук, хирĕç пымасть. Мĕншĕн тесен, колхоз йухăмĕнчи „сулахайрисен" йăнăшĕсем партире сылтăм сулăнчăка вăйланма, çирĕпленме лайăх условисем туса паракан йăнăшсем пулса тăраççĕ. Мĕншĕн? Мĕншĕн тесен, вăл йăнăшсем парти çулйĕрне пăсса урăхла кăтартаççĕ,—çапла вара вĕсем парти йатне пăсма çăмăллатаççĕ,—çавăнпа та вĕсем сылтăм елементсем парти йертсе пырассине хирĕç кĕрешес ĕçе çăмăллатаççĕ. Парти йатне вараланинчен пуçласа йараççĕ те ĕнтĕ сылтăм оппортуниссем хăйсен партийе хирĕç кĕрешес ĕçне. Çак ĕçре сылтăм сулăнчăкрисене „сулахай" сăмахсемпе çаптаракансем, вĕсен йăнăшĕсем, вĕсен парти çулйĕрне пăснисем пулăшса тăраççĕ. Çавăнпа та, сылтăм оппортунисăмпа ăнăçлăн кĕрешес пулсан, „сулахай" оппортуниссен йăнăшĕсене çĕнтерсе тăкмала. „Сулахайрисем" обйективлă сылтăмрисен сойузникĕсем пулса тăраççĕ.

Çакнашкал ĕнтĕ „сулахай" оппортунисăмпа сылтăм сулăнчăк хушшинчи хăйне йеверлĕ çыхăну.

„Сулахайрисенчен" хăшпĕрисем час-часах сылтăмрисемпе килĕшӳ (блок) тăвасси çинчен калаçкалани те çак çыхăну

пурринчен тухса тăрать. „Сулахайрисен" пĕр пайĕ ĕнер анчах урра-наступлени „туса", СССР-не пĕр ик-виç ернерех коллективласа çитерес тенĕ хыççăн—пайан халсăрланса алăсене усни, кĕрешӳре кăмăллăнах сылтăмрисене çул уçса пани, çапла вара кулаксем умĕнче чăн-чăнах (кавычкăсемсĕр) чакас çулпа пыни те çакăнтанах килет.

Халђхи вăхăтри хăйне йевĕрлĕ уйрăмлăх вăл—„сулахайрисен" йăнăшĕсемпе кĕрешни пирĕншĕн сылтăм оппортунссемпе ăнăçлăн кĕрешмели услови тата çак кĕрешӳн хăйне йевĕрлĕ форми пулса тăрать.

*Улттăмĕш ыйту.* Хресченсен пĕр пайĕ колхозсенчен кайала тухнине йепле хак памала?

*Ответ.* Хресченсен пĕр пайĕ кайала тухни вăл—йулашки вăхăтра пирĕн кăшт çирĕп мар колхозсем çуралнине, халĕ вĕсем тĕрексĕр елементсенчен тасалса пынине пĕлтерет. Вăл—вĕрсе хăпартнă колхозсем çухалассине, тĕреклисем йулса çирĕпленессине пĕлтерет. Епĕ çавна лайăх йапала тесе шутлатăп. Хăшпĕр йулташсем çакăн пирки йĕркесĕр хăраса, çухалса кайаççĕ, вĕрсе хăпартнă процентсене çухатасшăн мар тăрăшаççĕ. Теприсем хĕпĕртесе ӳкнĕ, колхоз йухăмĕ „пĕтесси" çинчен калаçаççĕ. Кусем те, лешсем те пит хытă йăнăшаççĕ. Кусем те, лешсем те колхоз йухăмне марксçисла ăнланассинчен айакра тăраççĕ.

Колхозсенчен, чи малтан, вилĕ чунсем текеннисем тухаççĕ. Вăл кайала тухни те мар, пушă вырăна палăртни çеç. Кирлĕ-ши пире вилĕ чунсем? Паллах, кирлĕ мар. Çурçĕр кавказцăсемпе украинцăсем вилĕ чунлă колхозсене салатса йарса, çĕнĕрен чăн-чăнах чĕрĕ, тĕреклĕ колхозсем организациленипе питĕ тĕрĕс тăваççĕ, тесе шутлатăп епĕ. Колхоз йухăмĕшĕн çакăн пек туни усăлă кăна пулма пултарать.

Иккĕмĕшĕнчен, пирĕн ĕçшĕн йут, тăшман елементсем тухаççĕ. Паллах, çак елементсене мĕн чухлĕ хăвăртрах кăларса сирпĕтĕç, колхоз йухăмĕшĕн çавăн чухлех лайăхрах пулĕ.

Йулашкинчен, иккĕленсе тăракан елементсем тухаççĕ, вĕсене йут теме те, вилĕ чунсем теме те йурамасть. Вĕсем—епĕр вĕсене пирĕн ĕç тĕрĕссине *пайан* ĕнентерсе парайман хресченсем, вĕсене епĕр *ыран* ĕнентеретпĕрех пулĕ темеле.

Çакнашкал хресченсем кайала тухни, вăхăтлăха пулсан та колхоз йухăмĕшĕн пысăк çухату пулаť. Çавăнпа та колхозра иккĕленсе тăракан елементсемшĕн кĕрешесси хаљхи вăхăтра колхоз йухăмĕнчи задачăсенчен пĕри пулаť.

Çапла ĕнтĕ, хресченсен пĕр пайĕ колхозсенчен кайала тухни çитменлĕх пулмасť иккен. Çапла ĕнтĕ, вăл кайала тухни колхозсене вилĕ чунсенчен, тăшманла йут елементсенчен хăтарнă пирки—вăл усăлă, колхоза сыватакан, çирĕплетекен ĕç пулса тăраť.

Пĕр уйăх кайа, тĕш тырă тăвакан районсенче 60 процент ытларах коллективланĕ, тесе шутлаччĕç. Хаљ, паллах, чăн-чăнах, тата мĕн чухлĕ те пулин тĕреклĕ колхозсене илсен, çак цифра чылай ўстерсе кăтартни курăнаť. Хресченсен пĕр пайĕ кайала тухнă хыççăн тĕш тырă тăвакан районсенче коллективизацилени 40 процент çинче çирĕпленсе йулсан,—вăл пурнăçа кĕме пултармалах,—çакă вара хаљхи вăхăтри колхоз йухăмĕнчи пит пысăк çитĕнў пулĕччĕ. Епĕ тĕш тырă тăвакан районсенче вăтам цифра анчах илетĕп, çакăнпа пĕрлех пирĕн хăшпĕр талккăшпех колхоза куçнă районсенче 80—90 процент коллективлани пуррине те лайăх пĕлсе тăратăп. Тĕш тырă тăвакан районсенче 40 процент коллективлани вăл—коллективизацин малтан шутласа хунă пилĕкçуллăх плана 1930-мĕш çулхи çуркунне тĕлне *икĕ хут* нумайтарах пурнăçа кĕртме пултарнине пĕлтерет.

Кам пултарĕ хаљ çак ССРС-не социалисăм çулĕпе малала йарас ĕçе татса паракан *пит пысăк* историлĕ çитĕнĕве йышăнмасăр тăма?

*Çиччĕмĕш ыйту.* Лайăх тăваççĕ-и иккĕленекен хресченсем колхозсенчен тухнипе?

*Ответ.* Çук, вĕсем лайăх тумаççĕ. Колхозсенчен кайала тухса вĕсем хăйсен интересĕсенех хирĕç пыраççĕ, мĕншĕн тесен колхозсем çеç хресченсене чухăнлăхран, тĕттĕмлĕхрен тухма май параççĕ. Колхозсенчен кайала тухса вĕсем хăйсене начар условисене тăрататççĕ, мĕншĕн тесен вĕсем Совет влаçĕ колхозсене паракан çăмăллăхсемпе, љготăсемпе усă курассинчен пăрăнса йулаççĕ. Колхозсенче пулнă йăнăшсем, парти çулйĕрне пăснисем колхозран тухас сăлтав пулма

пултараймаççĕ. Йăнăшсене колхозра йулсах ушкăнпала тӳрлетмеле. Совет влаçĕ вĕсемпе пĕтĕм вăйпа кĕрешсе пырать, çавăнпа вĕсене тӳрлетме пит те çăмăл.

Ленин калать:

„Таварлă производствăра вак хуçалăх йĕрки етемлĕхе чухăнлăхпа пусмăрлăхран çăлма пултараймасть" (т. XX, стр. 122).

Ленин калать:

„Вак хуçалăхпа нушалăхран тухма çук" (т. XXIV, стр. 540).

Ленин калать:

„Епĕр ирĕклĕ çĕр çинче ирĕклĕ грждансем пулин те, ĕлĕкхи пекех вак хуçалăхсенче ларсан,—çав çавах пĕтсе ларас хăрушлăх хупласа тăрĕ пире" (т. XX, стр. 417).

Ленин калать:

„Ушкăнланса, ертеллесе, йулташланса ĕçленипе анчах империалисăм вăрçи пире хуса кĕртнĕ чăтлăхран тухма май пур" (т. XXIV, стр. 537).

Ленин калать:

„Шултра кăтартулă хуçалăхсенче пĕрлешсе ĕçлеме тытăнмала, мĕншĕн тесен унсăрăн çав тери хуçалăх чухăнничен, Раççейри пек çав тери чăтма çук йăвăр условисенчен тухма çук" (т. XX, стр. 418).

Мĕне пĕлтереççĕ çаксем пурте?

Çаксем хресченсене нушапа тĕттĕмлĕхрен тухмали пĕртен-пĕр май вăл—колхозсем анчах пулса тăнине пĕлтереççĕ. Паллах, колхозсенчен кайала тухнипе хресченсем тĕрĕс тумаççĕ.

Ленин калать:

„Совет влаçĕн пĕтĕм ĕçĕнчен есĕр çакна пит лайăх курса тăратăр: вăл коммунăсене, ертелсене тата ытти пур тĕрлĕ организацисене те, вĕсем хресченсен уйрăм вак хуçалăхне пĕрлешсе ĕçлекен, йулташлă йе ертеллĕ хуçалăх йĕрки çине куçараççĕ йе куçарма пулăшаççĕ пулсан, вĕсене *питĕ пысăк* вырăна хурать" (т.XXIV,стр. 578).

Ленин калать:

„Совет влаçĕ коммунăсемпе йулташлăхсене *пирвайхи вырăна* хурса, уççăнах *пулăшса* тăрать" (т. XXIII, стр. 399).

Мĕне пĕлтерет çак?

Çак вăл—Совет влаçĕ колхозсене льготăсем парассине, уйрăм хуçалăхран ытларах хисеплессине пĕлтерет. Çак вăл—Совет влаçĕ колхозсене çĕр парас йенчен те, машинăсем, трактăрсем туйантарас йенчен те, акмали вăрлăх парас йенчен те т. ыт. те, налогсене çăмăллатса та, кивçенсем парса та колхозсене льготă парассине пĕлтерет.

Мĕншĕн совет влаçĕ колхозсене љготă парать, ытларах хисеплет?

Мĕншĕн тесен колхоз хресченсене чухăнлăхран хăтармали пĕртен-пĕр çул пулса тăрать.

Мĕншĕн тесен колхозсене ытларах пулăшни вăл—чухăнсемпе вăтамсене пулăшнин чи тивĕçлĕ форми пулса тăрать.

Çак кунсенче совет влаçĕ колхозсен мĕн пур пĕрлештернĕ ĕçвыљăхне (лашасене, ĕç вăкăрĕсене т. ыт. те), пĕтĕм ĕнесене, сыснасене, сурăхсене, чăх-чĕппе, вĕсем колхоз аллинче пулсан та, уйрăм колхозниксен аллинче пулсан та *икĕ çуллăха налогран хăтармала* турĕ.

Кунсăр пуçне Совет влаçĕ тата колхозниксем кивçен илнĕ, срукĕ тухнă укçана саплассине çак çулăн вĕçне *хăвармала* тата колхоза кĕнĕ хресченсенчен пĕтĕм штрафсене, сутпа шыраса илмеле тунă укçасене, вĕсене апрелĕн 1-мĕшчен хунă пулсан, *шыраса илмеле мар* турĕ.

Йулашкинчен, кăçалхи çул йепле пулсан те колхозниксене 500 мĕлйун тенкĕ кивçен парас ĕçе пурнăçа кĕртмелех, тесе йышăнчĕ.

Çак љготăсем колхозник-хресченсене пулăшас çĕре кайаççĕ. Çак љготăсем колхозран кайала чакассине парăнман, колхоз тăшманĕсемпе кĕрешес ĕçре çирĕпленнĕ, колхозшăн хытă тăрса, колхоз йухăмĕн аслă йалавне çӳлте тытса пыма пултарнă хресчен-колхозниксене пулăшас çĕре кайаççĕ. Çак љготăсем—хаљхи вăхăтра колхозсенче тĕп ушкăн пулса тăракан, пирĕн колхозсене çирĕплетсе йĕркелекен, социалисăм йенне темиçе мĕлйун хресчен хуçалăхĕсене çавăрма пултаракан чухăнсемпе вăтам хресчен-колхозниксене пулăшма кайаççĕ. Çак љготăсем хаљхи вăхăтри колхозсен тĕп кадăрĕсене, чăн-чăнах колхоз йухăмĕн паттăрĕсене пулăшма кайаççĕ.

Çак љготăсене колхозран кайала тухнă хресченсем *илеймеççĕ.*

Паллах мар-и вара колхозран кайала тухакан хресченсем йăнăш туни?

Паллах мар-и вара колхозсене кайала кĕрсен анчах вĕсем çак љготăсене илме пултарасси?

*Саккăрмĕш ыйту.* Коммунăсемпе мĕн тумала, вĕсене салатса йамала мар-ши?

*Ответ.* Çук, салатма кирлĕ мар, апла тумала мар. Епĕ хут çинче çеç шутланман чăн-чăн коммунăсем çинчен калатăп. ССРС-ĕн тĕш тырă тăвакан районĕсенче нумай пит паха коммунăсем пур, вĕсене пулăшма та, ырлама та тивĕçлĕ. Кунта епĕ кивĕ коммунăсене илетĕп, вĕсем темиçе çул хушши йăвăрлăхсем тÿссе, кĕрешÿре тĕрекленсе çитнĕ, хăйсен йатне тăраççĕ. Çĕнĕ, нумай пулмасть организациленĕ коммунăсене илсен, вĕсем хăйсен *ирĕкĕпе*, хресченсем хастарлăн пулăшса пынипе, пурнăç-пурлăха *ирĕксĕрлесе* пĕрлештермесĕр организациленнĕ пулсан анчах пурăнма пултараççĕ.

Коммунăсене организацилессипе вĕсен ĕçне йĕркелесе пырасси йăвăр ĕç. Шултра тата тĕреклĕ коммунăсем опăтлă кадăрсем, шанчăклă руководительсем пур пулсан анчах пурăнма, малала кайма пултараççĕ. Ертелсене васкаса коммунă уставĕ çине куçарни хресченсене колхоз йухăмĕнчен сивĕтме анчах пултарать. Çавăнпа та çак ĕçе пĕр васкамасăр, тĕплĕн шухăшласа тумала. Ертел тăвасси—çăмăлтарах ĕç тата вăл хресчен массишĕн пулсан ăнланмаларах ĕç. Çавăнпа та ертел халĕхи вăхăтра колхоз йухăмĕн чи нумай сарăлнă форми пулса тăрать. Йалхуçалăх ертелĕсем тĕрекленсе, çирĕпленсе пынăçемĕн анчах хресченсене пĕтĕм массăпа коммунă йенне кайма май пур. Çавăнпа та колхоз йухăмĕнчи аслă форми пулса тăракан коммунă малашне анчах колхоз йухăмĕн тĕп сыпăкĕ пулма пултарать.

*Тăхăрмĕш ыйту.* Кулаксемпе мĕн тумала?

*Ответ.* Ку таранччен пирĕн сăмах вăтам хресчен çинчен пычĕ. Вăтам хресчен рабочи класăн сойузникĕ, вĕсемпе пирĕн килĕшÿлĕ политикă тумала. Кулакпа—ĕç урăхла. Кулак вăл Совет влаçĕн тăшманĕ. Пирĕн унпа килĕшÿ çук, пулма та пултараймасть. Пирĕн кулаксем тĕлĕшпе вĕсене класĕпех пĕтерес политикă пулать. Паллах, çакăн пек калани вăл—епĕр вĕсене пĕр самантрах пĕтеретпĕр тенине пĕлтермест. Вăл—епĕр кулака çавăрса илсе, тĕппипех пĕтерсе хурас тĕлĕшпе ĕçлесе пырассине пĕлтерет.

Акă мĕн калаť Ленин кулак çинчен:

„Кулаксем вĕсем—чи хайар, чи тискер, чи усал експлоататăрсем. Вĕсем историре ытти патшалăхри çĕршывсенче пĕрре çеç мар помещиксен, патшасен, пупсен, кăпиталиссен влаçне кайала кӳнĕ. Кулаксен йыщĕ помещиксемпе кăпиталиссенчен те ытларах. Анчах халăх хушшинче кулаксем сахалăн... Çак çын йунне ĕмекенсем вăрçă вăхăтĕнче халăх нушипеле пуйрĕç, тырă тата ытти продуктăсен хакне ӳстерсе вĕсем пин, темиçе çĕр пин укçа пухрĕç. Çак ерешменсем вăрçăпа начарланнă хресченсен тата выçă рабочисен шучĕпе мăнтăрланса пынă. Вăл сĕлĕхсем ĕçхалăх йунне ĕçсе пынă, хулара тата хапрăкра рабочисем мĕн чухлĕ выçăхса пуранна, çавăн чухлĕ вĕсем пуйса пынă. Çав йун ĕçекенсем хăйсен аллине помещиксен çĕрĕсене илнĕ, илеççĕ те, вĕсем каллех чухăн хресченсене пусмăрлаççĕ“ (т. XXIII, стр. 206—207).

Епĕр çав йун ĕçекенсене, ерешменсене вĕсен експлоататăрла туртăмне хĕссе, картласа пырас политикăна тытнипе чăтса пытăмăр. Чăтнă, мĕншĕн тесен кулак хуçалăхĕпе кулак производствине урăх нимĕнпе те улăштарса хума çук пулнă; халь епĕр вĕсен хуçалăхĕсем вырăнне колхозсемпе совхозсен хуçалăхĕсене тăратма пултаратпăр. Çав ерешменсемпе йун ĕçекенсене малашне те чăтма кирлĕ мар. Колхозсене тĕртсе çунтаракан, колхоз ĕçĕнче хастарлă ĕçлекен йулташсене вĕлерекен, акана пăсма хăтланакан йун ĕçекенсемпе ерешменсене малашне те чăтни—рабочипе хресченсен интересĕсене хирĕçле пыни пулаť.

Çавăнпа та, кулаксене класĕпех пĕтерес политикăна çине тăрсах, большевиксем çеç пултаракан тимлĕхпе пурнăçа кĕртсе пымала.

*Вуннăмĕш ыйту.* Мĕнле практикăлă задачă тăраť колхозсем умĕнче çывăхри вăхăтра?

*Ответ.* Колхозсем умĕнче çывăхри вăхăтра тăракан практикăлă задачă вăл—акана хатĕрленессишĕн, акас çĕр талкăшне ытларах ӳстерессишĕн, çуракине тĕрĕс организацилессишĕн кĕрешесси пулмала.

Акана хатĕрленес задачăпа колхозсен пур ытти задачисем те çыхăнулă пулмала.

Акана организацилес ĕçе колхозра пур ытти ĕçсем те пăхăнса тăмала.

Çак вăл, колхозсен тата унти партире тăман активăн тĕреклĕхне, колхоз руководительĕсемпе вĕсен большевикла чăмăрĕн пултарулăхне—çатăрти резолюцисемпе сарлака саламлă сăмахсем тăрăх мар, акана йĕркелĕ организацилесе чĕрĕ ĕç туни урлă тĕрĕслессине пĕлтерет.

Çак практикăлă задача тивĕçлипе вырăна кĕртес пулсан, колхоз ĕçлекенĕсен вăйне колхоз тăвас ĕçĕн *хуçалăх* ыйтăвĕсем йенеле, *колхоз ăшĕнчи* строительствă йенеле çавăрмала.

Ку вăхăтчен колхоз ĕçлекенĕсен тĕп ĕçĕ—коллективизацин пысăк цифрисем хыççăн чупасси пулнă; çав вăхăтрах, çынсем чăн-чăн коллективизаципе хут çинчи коллективизаци хушшинче мĕнле уйрăмлăх пуррине те курасшăн пулман. Халь ĕнтĕ çапла цифрăсем хыççăн чупассине айакка ывăтса йамала. Халь ĕçлекенсен вăйне колхозсене çирĕплетесси çине, колхозсене организаци йенĕпе формăласа çитересси çине, колхозсенчи ĕçе кирлĕ пек *йĕркелесе йарасси* çине хумала.

Ку вăхăтчен колхозри ĕçлекенсем пысăк колхозсем, „гигант" текен йапаласем организацилессипе супнă, çав „гигантсем" йалсенче хуçалăх тымарĕсемсĕр тăрса йулнипе, час-часах хут çинче тăракан ăнăçсăр камендатурсем çеç пулса кайнă. Кăтартасшăн анчах ĕçлени, çапла вара, чăн-чăн ĕçе хуплаcа пынă. Халь ĕнтĕ, çапла кăтартасшăн анчах ĕçлесси хыççăн чупассине айакка ывăтса йамала. Халь ĕнтĕ ĕçлекенсен йалти колхозсен организаципе хуçалăх ĕçĕсем çине ытларах çаврăнса пăхмала. Çак ĕç ăнăçулă пулса пырсан „гигантсем" хăйсемех пулĕç.

Ку вăхăтчен вăтамсене колхозри йертсе пырас ĕçе хутшăнтарасси çине сахал çаврăнса пăхнă. Çав вăхăтрах вăтамсем хушшинче пит ăста хуçасем пур, вĕсем колхоз тăвас ĕçре пит аван хуçалăхлă ĕçлекенсем пулма пултараççĕ. Халь пирĕн çак хамăрăн ĕçри çитменлĕхе пĕтермеле. Халь колхозсенче йертсе пырас ĕçе вăтамсен чи лайăх çыннисене хутшăнтарса, вĕсене çак ĕçре хăйсен пултарулăхне палăртма май парас задачă тăрать.

Ку вăхăтчен хресчен хĕрарăмĕсем хушшинче ĕçлесси çине çителĕклĕ çаврăнса пăхман. Хресчен хĕрарăмĕсем

хушшинче ĕçлесси пирĕн ĕçре чи йапăх вырăн пулнине иртнĕ тапхăр лайăх кăтартса пачĕ. Хаљ çак çитменлĕхе тĕппех, пуçпех пĕтермеле.

Ку вăхăтчен чылай районсенчи коммуниссем колхоз тăвас ĕçри пур задачăсене те хăйсен вăйĕсемпех туса пыма пултаратпăр, тесе шутланă. Çавăнпа вара вĕсем партире тăман йулташсене колхозсенчи ответлă ĕçе хутшăнтарасси çине, партире тăманнисене колхозсен ĕçне йертсе пырас çĕре хутшăнтарасси çине, колхозсенче партире тăманнисен активне организацилесси çине кирлĕ пек çаврăнса пăхман. Пирĕн парти историйĕ те, колхоз тăвас ĕçĕн иртнĕ тапхăрĕ те çапла шутлани тĕпĕ-йĕрĕпех тĕрĕс маррине кăтартса параççĕ. Коммуниссем хăйсен хупăлчи ăшне кĕрсе ларса, партире тăманнисемпе хăйсем хушшинче çтена хывса уйрăлнă пулсан, вĕсем ĕçе пĕтерсе лартнă пулĕччĕç. Социалисăмшăн кĕрешес ĕçре коммуниссем мухтава тухрĕç пулсан, коммунисăм тăшманĕсем ишĕлсе анчĕç пулсан, вăл, ыттисенчен пуçне, коммуниссем ĕç патне партире тăманнисен чи лайăх çыннисене хутшăнтарма пĕлнинчен, партире тăман сийсенчен вăй илсе тăма пĕлнинчен, вĕсем хăйсен партийĕ тавра партире тăман активăн сарлака массисене пĕтĕçтерсе тăма пĕлнинчен килет. Хаљ партире тăманнисемпе ĕçлессин çитменлĕхне тĕппех, пуçпех пĕтермеле.

Çак хамăр ĕçри çитменлĕхсене пĕтерни, вĕсене тымарĕпех кăклани,—çак вара колхозсенчи *хуçалăх* ĕçне тĕрĕс çул çине лартнине пĕлтерет.

Çапла вара:

1) Акана тĕрĕс организацилемеле—çакнашкал задачă.

2) Колхоз йухăмĕн хуçалăх ыйтăвĕсем çине çаврăнса, пăхмала — çакнашкал çак задача татса пама кирлĕ хатĕр.

*«Правда» № 92,*

*1930 ç. 3 апрел.*

# ЙАЛТА ЁҪЛЕССИ ҪИНЧЕН

**ПСК(б)П Тӗпкомӗпе Тӗп Контроԓ Комиҫҫин пӗрлешӳлӗ пленӑмӗнче 1933 ҫулта йанварӗн 11-мӗшӗнче каланӑ сӑмах.**

Йулташсем! Тухса калакансем партин йалти ӗҫӗсем ҫинчен, унӑн ҫитменлӗхӗсемпе ҫитӗнӗвӗсем ҫинчен,—пуринчен ытла ҫитменлӗхӗсем ҫинчен, тӗрӗс кӑтартса пачӗҫ, тесе шутлатӑп епӗ. Ҫапах та, вӗсем пирӗн йалти ӗҫсен ҫитменлӗхӗсен тӗп сӑлтавӗсем ҫинчен, вӑл ҫитменлӗхсен тымарӗсем ҫинчен каласа парайманӗҫ пек туйӑнать мана. Ҫав вӑхӑтрах ӗҫӗн ҫав йенӗ пирӗншӗн пит те пысӑк интерес пулса тӑрать. Ҫавӑнпа та пирӗн йалти ӗҫсен ҫитменлӗхӗсем ҫинчен тӳррипе, боԓшевиксем калама пултаракан тӳрлӗхпе хам шухӑша каласа пама парӑр мана.

Мӗнре-ха пирӗн йалти ӗҫсен тӗп ҫитменлӗхӗ ҫак йулашки ҫулта, 1932-мӗш ҫулта?

Тӗп ҫитменлӗх вӑл—пирӗн тыр-пул хатӗрлес ӗҫ кӑҫал иртнӗ ҫулхинчен, 1931-мӗш ҫулхинчен, чылай пысӑкрах йӑвӑрлӑхсемпе иртни.

Ҫакна тырӑ начар пулнӑ пирки ҫапла пулчӗ, тесе калама нийепле те май ҫук, мӗншӗн тесен кӑҫал тырӑ пирӗн пӗлтӗрхинчен начар мар, лайӑхрах пулчӗ. 1932 ҫулта пӗтӗм тыр-пул тухӑҫӗ 1931 ҫулхинчен нумайтарах пулнине никам та хирӗҫлеме пултараймасть, мӗншӗн тесен 1931 ҫулта Совет Сойузӗн Ҫурҫӗрпе Хӗвелтухӑҫри пилӗк тӗп районӗсенче уйар ҫанталӑк пулни ҫӗршыври тыр-пул тухӑҫне чылай чакарчӗ. Паллах ӗнтӗ, 1932 ҫулта та Кубаԓпе Терӗкре, ҫавӑн пекех тата Украинӑн хӑшпӗр районӗсенче ҫанталӑк йурӑхлӑ пулман пирки тыр-пул тухӑҫӗ кӑшт чакрӗ, ҫухалчӗ. Анчах ҫак ҫухатусем вӗсем Совет Сойузӗн Ҫурҫӗрпе Хӗвелтухӑҫ районӗнче 1931 ҫулта уйар ҫанталӑк пирки пулнӑ ҫухатусен ҫурри

те пулманни пирки нимĕн те иккĕленсе тăмали çук. Апла пулсан еппин, пирĕн çĕршывра тыр-пул 1932 çулта 1931 çулхинчен нумайтарах пулнă. Апла пулин те, 1932 çулта пирĕн тыр-пул хатĕрлес ĕç пĕлтĕрхинчен чылай пысăкрах йăвăрлăхсемпе иртрĕ.

Мĕнре-ха кунта ĕç? Ăçта-ха пирĕн ĕçĕн çитменлĕхĕсен сăлтавĕсем? Мĕнле ăнланмала-ха çак çыпăçусăрлăха?

1) Пуринчен малтан çак—пирĕн вырăнти йулташсем, пирĕн йалта ĕçлекенсем колхозсен тыр-пул суту-илӳне усçнинчен тухса тăнă çĕнĕ лару-тăрăва ăнланса шута илейменнинчен килнĕ. Çавăнпа та ĕнтĕ, вĕсем çак çĕнĕ лару-тăрăва шута илеймен пирки, çакăн пирки ĕнтĕ вĕсем çак çĕнĕ лару-тăру май çĕнĕле ĕçлеме пуçласа йарайман. Тыр-пул сутса илме колхоз суту-илĕвĕ пулман вăхăтра, тыр-пулшăн икĕ хак, патшалăхпа пасар хакĕ пулман вăхăтра,—йалта пĕр лару-тăру пулнă. Колхозсене тыр-пулпа суту-илӳ тума ирĕк парсан çак лару-тăру хăвăрт улшăнмала пулчĕ, мĕншĕн тесен колхоз суту-илӳне пуçласа йани—пасар хакне, патшалăх хакĕнчен çӳлĕрех хака, ирĕк панине пĕлтерет. Калама та кирлĕ мар, çак вăл хресченсем тырра патшалăха парас ĕçре тытăнсарах тăма пуçлассине пуçарса йама пултарнă. Хресчен çапла шутланă: „тыр-пулпа ирĕклĕн суту-илӳ тумали йĕрке кăларнă, тырра пасар хакпе сутма пулать, пасарта сутса çав тырăшăн патшалăха панă чухнехинчен нумайтарах укçа илме пултаратăп,—апла епĕ, хам ухмах мар пулсан, тырра тытарах усрамала, патшалăха сахалтарах памала, колхоз суту-илĕвĕнче сутма нумайтарах хăвармала, çапла тунипе вара тыррине пĕр хисепех сутнăшăн укçине нумайтарах илме тăрăшмала“.

Пит те паллă, хăйех тухса тăракан шухăш!

Анчах инкекĕ кунта—çав пирĕн йалсенче ĕçлекенсем, кирек йепле пулсан та вĕсенчен нумайăшĕ, çак çăмăл, хăйех тухса тăракан йапалана ăнланса илейменниче. Совет влаçĕ панă заданисене тултармасăр хăварас мар тесе, коммуниссен çак çĕнĕ тапхăрта тыр-пул хатĕрлес ĕçе тырăсене пуçтарса кĕртнĕ хыççăнхи малтанхи кунсенчех, 1932 çулти ийуль уйăхĕнчех пур майсемпе те вăйлатса, хăвăртлатса

пымала пулнӑ. Лару-тӑру ҫавна тума хушнӑ. Анчах мӗнле тунӑ-ха вӗсем чӑннипе? Тыр-пул хатӗрлес ӗҫеваскатас вырӑнне вӗсем тӗрлӗрен фондсем тӑвассине васкатма тытӑннӑ, ҫапла вара тырӑ паракансене хӑйсем патшалӑх умӗнче тумали ӗҫсене тунӑ чух ытларах туртӑнкаласа тӑма пулӑшнӑ. Ҫӗнӗ тапхӑра ӑнланса илеймен пирки вӗсем—хресченсем тыр-пула патшалӑха парас ӗҫре тытӑнса тӑнипе тыр-пул хатӗрлевне чӑрмантарасран мар хӑрама пуҫланӑ, хресченсем кайран, колхоз суту-илӗвӗ пуҫлансан, пасарсенче сутма тырӑ хӑварма аса илеймӗҫ: тытӗҫ те парӗҫ мӗн пур пек тыррисене елеватӑрсене, ыррине курӑн вӗсемпе, тесе хӑрама тытӑннӑ.

Урӑхла каласан, пирӗн йалти коммуниссем, кирек йепле пулсан та вӗсенчен нумайӑшӗ, колхоз суту-илӳне *лайӑх* йенчен анчах ӑнланса илнӗ, унӑн *лайӑх* йенне анчах тавҫӑрса, ҫавӑрса илнӗ, анчах колхоз суту-илӳн *усал* йенӗсене пачах та ӑнланса, тавҫӑрса илеймен,—вӗсем, коммуниссем, тыр-пула пуҫтарса кӗртнӗ хыҫҫӑнхи малтанхи кунсенчех тыр-пул хатӗрлес ӗҫе пӗтӗмӗшпех сарса йарса хӑвӑртлатма тытӑнмасан колхоз суту-илӗвӗн усал йенӗсем патшалӑха пысӑк сийен кӳме пултарнине ӑнланса илеймен.

Ҫак йӑнӑшсене колхозсенче ӗҫлекенсем анчах мар тунӑ. Вӗсене совхозсен директӑрӗсем те тунӑ,—вӗсем патшалӑха памали тырра тӳсме ҫук нумай тытса усраса, пасарсенче хаклӑрах хаксемпе сутма тытӑннӑ.

Халӑх комиссарӗсен канашӗпе парти Тӗпкомӗ хӑйсен колхоз суту-илӳне сарса йарас тӗлӗшпе йышӑннӑ паллӑ постановленийӗнче шута илнӗ-ши ҫак колхоз суту-илӗвӗнче тырӑпа сутӑ тума ирӗк панинчен тухса тӑракан ҫӗнӗ лару-тӑрӑва? Шута илнӗ. Вӑл постановленире тӳрех ҫапла каланӑ: колхоз суту-илӗвӗнче тырӑпа сутӑ тума—тыр-пул хатӗрлевне пӗр хӑвармасӑр, пӗтӗмпех тултарса ҫитерсен тин, вӑрлӑх пухса ҫитерсен тин ирӗк пама йурӑ, тенӗ. Унта тӳрех каланӑ: тыр-пул хатӗрлевне тултарса, вӑрлӑхсене уйӑрса хурсан тин, сӑмахран, 1932 ҫулхи йанварӗн 15 тӗлнеле,—ҫак условисене пурнӑҫа кӗртсен тин колхоз суту-илӳне пуҫласа йама йурӑ, тенӗ. Халӑх комиссарӗсен

канашĕпе парти Тĕпкомĕ çак постановленипе пирĕн йалти ĕçлекенсене: хăвăрăн тимлĕхĕре тĕрлĕрен фондсем, запассем тăвасси çине ан йарăр, тĕп задачăран ан пăрăнăр, тыр-пул хатĕрлевне тыр-пулсене уйран пуçтарса кĕнĕ хыççăнхи малтанхи кунсенчех пуçарса йарăр, çак ĕçе васкатăр, мĕншĕн тесен пĕрремĕш заповĕд—тыр-пул хатĕрлев планне тултарасси, иккĕмĕш заповĕд — вăрлăхсене пухса хурасси пулаť, çак условисене пурнăçа кĕртсе çитерсен тин колхоз суту-илĕвĕнче тырăпа сутă тума пуçласа, ăна сарса йама пултаратăр, тенĕ пек хытарса каланă.

Тен, Тĕпком Политбўровĕпе Халăх комиссарĕсен канашĕн йăнăшĕ—ĕçĕн çак йенĕ çине çаврăнса пăхасси çинчен çине тăрса, çителĕклĕ хыттăн кăтартса паманнинче, пирĕн йалти ĕçлекенсене колхоз суту-илĕвĕнче тăракан хăрушлăхсем çинчен кирлĕ таран, хыттăн асăрхаттарманнинче пулĕ. Анчах вĕсем вăл хăрушлăхсем çинчен асăрхаттарнă, çителĕклĕ уççăн асăрхаттарнă,—ун çинчен нимĕнле иккĕленў те пулма пултараймасť. Калас пулаť: Тĕпкомпа Халăх комиссарĕсен канашĕ вырăнти ĕçлекенсен, районри анчах мар, çавăн пекех облăçри хăшпĕр ĕçлекенсен ленинла пиçĕхўне тата вичкĕнлĕхне маларах хурса хакланă.

Тен, колхозсене тыр-пулпа суту-илў тума ирĕк памала пулман? Колхоз суту-илĕвĕнче лайăх йенĕсемсĕр пуçне усал йенĕсем те пуррине шута илсен, тен, çакна уçни йăнăш пулнă?

Çук, ку йăнăш пулман. Пĕр революцилĕ ĕç те, ăна тĕрĕс туса пымасан, хăшпĕр усал йенсен сийенĕнчен сыхланса йулма пултараймасť. Колхозсем тырăпа суту-илў тăвасси çинчен те çавнах калама тивет. Колхоз суту-илĕвĕ йалшăн та, хулашăн та, рабочи класшăн та, хресченсемшĕн те кирлĕ те, усăлă та. Шăпах, вăл усăлăшăн пуçарса йама кирлĕ пулнă та ĕнтĕ ăна.

Мĕне асра тытса тăнă-ха Халăх комиссарĕсен канашĕпе Тĕпком колхозсен тыр-пул суту-илўне уçмала тунă чух?

Вĕсем, пуринчен ытла, хулапа йал хушшинчи тавар çаврăнăçĕн никĕсне сарса йарассине, рабочисене йалхуçалăх çимĕçĕсене тăратас ĕçе лайăхлатассине, хула туса кăларнă

таварсене хресченсем патне çитерсе тăрас ĕçе лайăхлатассине шута илсе тунă. Çаксене тума патшалăхпа коопераци суту-илĕвĕ анчах ĕçлесе тăни çителĕксĕрри пирки нимĕн иккĕленсе тăмали те çук. Тавар çаврăнăçĕн çав каналĕсем çумне çĕнĕ канал—колхоз суту-илӳне хушмала пулнă. Колхоз суту-илӳне пуçарса йанипе хушрăмăр та ĕнтĕ епĕр çак çĕнĕ канала.

Вĕсем, малала, çак ĕçе—колхозсен тыр-пул суту-илӳне пуçарса йанипе колхознике тепĕр тупăш илмели май туса парса, унăн економикине тĕреклетессине шута илсе тунă.

Вĕсем, йулашкинчен, çак ĕçе—колхоз суту-илӳне пуçарса йанипе хресчене колхозсенче тыр-пула акас ĕçе те, тыр пула пуçтарса кĕртес ĕçе те лайăхрах тума çĕнĕ тимлĕх парассине шута илсе тунă.

Халăх комиссарĕсен канашĕпе Тĕпкомăн çак шухăшĕсем тĕрĕссине колхозсенчи пурнăçăн йулашки вăхăтсенчи фактисем пĕтĕмпех çирĕплетсе панине пĕлетĕр есĕр. Колхозсене çирĕплетес ĕç вăйланса пыни, колхозсенчен кайала тухма чарăнни, уйрăм хуçалăхлă хресченсем колхозала туртăнни ӳссе пыни, колхозниксем колхоза çĕнĕ членсем илнĕ чух пит те суйласа кĕртме тăрăшни,—çаксем вĕсем тата ытти çакăн пек нумай ĕçсем вĕсем пурте пĕр иккĕленмеле марах, колхоз суту-илĕвĕ колхозсене хавшатни çинчен мар, пушшех вăйлатни тата тĕреклетни çинчен калаççĕ.

Çапла вара, пирĕн йалти ĕçсен çитменлĕхĕсем колхоз суту-илĕвĕ пурринчен мар, ăна хăшпĕр чухне пурнăçа тĕрĕс кĕртсе пыманнинчен, çĕнĕ лару-тăрăва шута илме пĕлменнинчен, хамăр ĕретсен еколхоз суту-илĕвĕ вăхăтĕнчи çĕнĕ лару-тăрăва майлă йĕркелесе тăратма пĕлменнинчен килеççĕ.

2) Пирĕн йалти ĕçсен çитменлĕхĕсен иккĕмĕш сăлтавĕ вăл—пирĕн вырăнсенчи йулташсем,—çав йулташсем çеç те мар,—тыр-пул тăвакан тĕп районсенче колхозсем пуçпулса тăнă пирки пирĕн йалти ĕçсен условийĕсем улшăннине ăнланса илейменни пулаť. Пирĕн тыр-пуллă районсенче колхозла формă хаљ хуçалăхра пуçпулса тăракан формă пулнипе епĕр пурте савăнатпăр. Анчах çак йапала пирĕн йалхуçалăхне аталантарса пырас ĕçри задачăсемпе пирĕн ответлăха

пĕчĕклетме мар, пушшех те пысăклатса йанине пурте ăнланса илеймеççĕ. Нумайăшĕ çапла шутлаççĕ: пĕр-пĕр районра йе пĕр-пĕр облăçра, калăпăр, коллективласси кĕске вăхăтрах 70 йе 80 процента çитрĕ пулсан, кунпала вара пур ĕçе те туса çитерНĕ, епĕр малашне ĕç хăй тĕллĕнех пулса пырасса шанма та пултаратпăр, коллективлани хăй ĕçне хăйех тăвĕ, йалхуçалăхне вăл хăйех хăпартса йарĕ, тесе шутлаççĕ. Анчах çапла шутлани йăнăш йапала вăл, йулташсем. Чăннипе, хуçалăха коллективпа туса пыма пуçлани, хуçалăхăн çав пуçпулса тăракан форми çине куçни епĕр йалхуçалăхĕшĕн тăрăшассине пĕчĕклетме мар, пушшех пысăклатса йарать, йалхуçалăхне хăпартас ĕçре коммуниссем йертсе пырассине пĕчĕклетме мар, пушшех пысăклатать. Йалхуçалăхне хăпартас ĕçре ĕç хăй тĕллĕн пулса пырасса шанса ĕçлени ку вăхăтра нихçанхичен те хăрушă. Ĕç хăй тĕллĕн пулса пырасса шанса ĕçлени хаЂ пĕтĕм ĕçе пĕтерсе хума пултарать.

Йалта уйрăм хуçалăхлă хресченсем тĕп вырăн йышăнса тăнă вăхăтра парти йалхуçалăхне хăпартас ĕçре уйрăм пулăшусем, канашлусем йе асăрхаттарусем парса тăнипе çырлахма пултарнă. Вăл вăхăтра уйрăм хуçалăхпа пурнакан хресченĕн хăй хуçалăхĕшĕн хăйĕн тăрăшмала пулнă, мĕншĕн тесен хăй хуçалăхĕшĕн ответ тытассине никам çине те йăвантарма май килмен, вăл хуçалăх унăн хуçалăхĕ пулнă, çавăнпа хăйсĕр пуçне никам çине те шанмали пулман. Ун чухне уйрăм хуçалăхлă хресченĕн, çăкăрсăр йулса выçă вилĕмпе вилес мар тесен, акса хăварассишĕн те, тырпула пуçтарса кĕртессишĕн те, йалхуçалăхĕнчи мĕн пур ытти ĕçсемшĕн те хăйĕннех тăрăшмала пулнă. Коллективлă хуçалăха куçнăран вара ĕç тĕпренех улшăнчĕ. Колхоз уйрăм хуçалăх мар. Колхозниксем çапла калаççĕ те хаЂ: „колхоз манăн та, манăн мар та, вăл манăн, çав вăхăтрах вăл Ивановăн, Хĕлипĕн, МихаЂан тата ытти колхоз членĕсен те, колхоз пурин те“, теççĕ. ХаЂ вăл, колхозник, ĕнерхи уйрăм хуçалăхлă хресчен, пайанхи коллективис,—колхоз ăна çăкăрсăр хăварас çуккине плĕсе, ответлăха хăй çинчен сирсе, колхозăн ытти членĕсем çине шанма пултарать. Çавăнпа та унăн, колхозникăн, уйрăм хуçалăхпа пурăннă чухнехи пекех

тăрăшу çук, мĕншĕн тесен хуçалăхшăн тăрăшассипе ответ тытассине хаљ пĕтĕм колхозниксем хушшинче уйăрса панă.

Мĕн курăнса тăрать-ха ĕнтĕ çакăнтан? Çакăнтан—хуçалăха йеркелесе пырассишĕн ответ тытас ĕçри тĕп йăвăрлăх хаљ уйрăм хресченсем çинчен колхоза йертсе пыракансем çине, колхоза йертсе пыракансен чăмăрĕ çине куçни курăнса тăрать. Хаљ ĕнтĕ хресченсем хуçалăхшăн тăрăшассипе ĕçе пĕлсе йертсе пырассине хăйсенчен ыйтмаççĕ, колхоза йертсе пыракансенчен, тĕрĕсрех каласан—хăйсенчен ыйтнинчен ытларах колхоза йертсе пыракансенчен ыйтаççĕ. Мĕне пĕлтерет вара çак? Çак ĕнтĕ йалхуçалăхне малала йарас ĕçре малашне парти уйрăм пулăшусем парса пынипех чарăнса тăма пултарайманнине пĕлтерет. Унăн хаљ колхозсене йертсе пырассине хăй аллине илмеле, ĕçшĕн хăй çине ответлăх илмеле, колхозниксене хăйсен хуçалăхне наукăпа техникă никĕсĕ çинче малала йама пулăшса пымала.

Анчах ку пĕтĕмпех мар-ха. Колхоз вăл пысăк хуçалăх. Пысăк хуçалăха плансăр йĕркелесе пыма çук. Çĕрĕçĕнче çĕршер, хăшпĕр чух пиншер киле пĕрлештерсе тăракан пысăк хуçалăха план тăрăх çеç тытса пыма пулать. Унсăрăн вăл пĕтет, арканса кайать. Акă ĕнтĕ сире колхоз йĕрки вăхăтĕнчи тепĕр çĕнĕ услови,—уйрăм вак хуçалăхсемпе пурăннă чухнехинчен тĕпренех уйрăмскер. Йурать-и çакнашкал хуçалăха йĕркелесе пырас ĕç хăй тĕллĕнех пулассине шанса, ăна самотёк аллине пама? Паллах, йурамасть. Çакнашкал хуçалăха тытса пыма—кăшт та пулин хуçалăха планласа, йĕркелĕ йертсе пыма пултаракан çынсем кирлĕ. Паллах ĕнтĕ, колхозсем тăвас ĕçе совет влаçĕ йаланах хутшăнса ĕçлемесĕр, унăн куллен-кунхи пулăшăвĕсĕр çакнашкал хуçалăха йĕркелесе вăйлатса йама май çук.

Мĕн курăнса тăрать-ха тата çакăнтан? Çакăнтан колхоз йĕрки партипе правительствăн йалхуçалăхне хăпартас ĕçри ответлăхне, уншăн тăрăшассине пĕчĕклетме мар, пушшех те пысăклатни курăнса тăрать. Çакăнтан—парти, вăл колхоз йухăмне чăнахах йертсе пырас тет пулсан, колхозсемпе вĕсене йертсе пырассинче мĕн пур пĕчĕк ĕçсене те хутшăнса ĕçлесе пыма кирли курăнса тăрать. Çакăнтан—парти кол-

хозсемпе ҫыхӑнса тӑрас ӗҫе пӗчӗклетме мар, пушшех темиҫе хут ӳстерсе йама кирли, парти колхозсене вӑхӑтра пулӑшу парса, пулас хӑрушлӑхсенчен сыхласа тӑма пултарас тесе, колхозра мӗн пулса иртнисене пурне те пӗлсе тӑма кирли курӑнса тӑрать.

Анчах мӗн куратпӑр-ха епӗр ӗҫре? Ӗҫре епӗр сахал мар районри, облӑҫри организацисем колхоз пурнӑҫӗнчен, колхозсен ыйтӑвӗсенчен айакра тӑнине куратпӑр. Лараҫҫӗ ҫынсем кӑнцелерисенче те, перасемпе кӑна савӑнӑҫлӑн чакӑртаттараҫҫӗ, колхозсем бӳрократла кӑнцелерисемсӗрех аталанса пынине асӑрхамаҫҫӗ. Хӑшпӗр чухне колхозсенчен уйрӑлса кайни ҫакӑн патнех илсе ҫитернӗ: хӑшпӗр крайри организацисен членӗсем хӑйсен крайӗнчи колхоз ӗҫӗсем ҫинчен хӑйсен крайӗнчи районри организацисем урлӑ мар, Мускавра Тӗпком членӗсем урлӑ анчах пӗлни пулнӑ. Ҫак лайӑх мар, анчах чӑн пулнӑ йапала, йулташсем. Уйрӑм хуҫалӑхсенчен колхозсене куҫни коммуниссен йалта йертсе пырассине вӑйлатмала пулнӑ. Анчах уйрӑм хуҫалӑхсем колхозсене куҫни хӑшпӗр чух коммуниссене коллективизацин пысӑк процентӗсемпе мухтанса нимӗн тумасӑр ларасси патне, ӗҫе самотӧк аллине парасси патне, ӗҫ хӑй тӗллӗн пулса пырассине шанасси патне илсе ҫитернӗ. Колхоз хуҫалӑхӗсене планпа йӗркелесе пырас задачӑ коммуниссен колхозсенче йертсе пырас ӗҫне вӑйлатмала пулнӑ. Анчах ӗҫре чылай вырӑнсенче коммуниссем айакра тӑнӑ, колхозсенче шур офицер пулнӑ ҫынсем, петлюрӑвцӑ пулнисем, пӗр сӑмахпа каласан, рабочисемпе хресченсен тӑшманӗсем ҫӗмӗрттерсе пурӑннӑ.

Ҫакнашкал ӗнтӗ пирӗн йалти ӗҫсен ҫитменлӗхсен иккӗмӗш сӑлтавӗ.

3) Пирӗн йалти ӗҫсен ҫитменлӗхӗсен виҫҫӗмӗш сӑлтавӗ вӑл—пирӗн чылай йулташсем хуҫалӑхӑн ҫӗнӗ формисем пулса тӑракан колхозсене ытлашши хак пани, ытлашши хак панипе колхозсене турӑшсем вырӑнне туса хуни пулса тӑрать. Вӗсем шутланӑ тӑрӑх, колхозсем хуҫалӑхӑн социалисӑмла форми пулса тӑраҫҫӗ тӗк, ӗҫӗ те пӗтрӗ: колхозсен ӗҫӗсене тӗрӗс йертсе пырасси, колхоз хуҫалӑхӗсене тӗрӗс планласа пырасси, кол-

хӧзсене кăтартулă социалисăмла хуçалăхсем туса йарасси хăйех пулса пыраť пек вара. Колхозсем организаци тĕлĕшпе халь те вăйсăррине, вĕсене парти—тĕрĕсленĕ çирĕп большевикла вăйсене парас йенчен те, колхоз ĕçĕнче кунсерен йертсе пырас йенчен те лайăх пулăшса тăма кирлине ăнланса илеймен вĕсем. Анчах ку пĕтĕмпех мар, тĕп çитменлĕх те мар-ха. Тĕп çитменлĕх кунта—пирĕн чылай йулташсем йалхуçалăхне организацилес ĕçре çĕнĕ формă пулса тăракан колхозсен вăйне, вĕсем мĕн тума пултарассине ытлашши пысăк вырăна хурса шутланинче пулса тăраť. Колхоз хуçалăхăн социалисăмла форми пулса тăраť пулин те,—văл çапах та тĕрлĕрен хăрушлăхсем килсе тухасран, колхозсене йертсе пырас ĕçе тĕрлĕрен контр-револьуцилĕ елементсем кĕрсе ларасран, хăшпĕр условисенче совета хирĕçле елементсем хăйсен ĕçĕнче колхозсемпе усă курма пултарасран ирĕклĕ маррине ăнланса илеймен вĕсем.

Колхоз вăл, советсем *политикăла* организацин социалисăмла форми пулса тăнă пекех, *хуçалăхла* организацин социалисăмла форми пулса тăраť. Колхозсем те, советсем те пирĕн револьуцин питех те пысăк çĕнтерĕвĕсем, рабочи класăн пысăк çĕнтерĕвĕсем пулса тăраççĕ. Анчах колхозсемпе советсем организацин формийĕ кăна пулаççĕ, чăнахах та вĕсем социалисăмла формăсем, çапах та организаци формисем кăна. Мĕн пурĕ те çав формăсем ăшне мĕнле содержани кĕртсе вырнаçтарнинчен килет. Епĕр рабочисемпе салтаксен депутачĕсен совечĕсем пĕр вăхăтлăха револьуцийе хирĕç контр-револьуцийе пулăшнине те пĕлетпĕр. Çакнашкал ĕç вăл, сăмахран, пирĕн ССР Сойузĕнче 1917 çулти ийуль уйăхĕнче советсене меншевиксемпе ес-ерсем йертсе пынă вăхăтра, советсем контр-револьуцийе револьуцийе хирĕç кĕрешме пулăшса тăнă вăхăтра пулнă. Çакнашкал ĕç, сăмахран, Германире 1918 çул вĕçĕнче, советсене социал-демократсем йертсе пынипе вĕсем револьуцийе хирĕç контр-револьуцийе пулăшса тăнă вăхăтра пулнă. Апла пулсан, ĕç организаци форми пулса тăракан советсенче кăна мар, ку формă револьуцин питех те пысăк çĕнтерĕвĕ пулаť пулин те, ĕç кунта мар. Чи малтан ĕç кунта—советсен ĕçĕн

содержанийёнче, советсем мĕнле ĕçлесе пынинче, ĕç кунта— советсене *кам* йертсе пынинче: револуционерсем йе контр-револуционерсем. Çакăнтан килет те, сăмахран, контр-револуционерсем ытла йаланах совета хирĕçле калаçманни. Сăмахран, вырăс контр-револуцин пуçĕ Милуков, Кронштадт восстанийĕ вăхăтĕнче советсем майлă калаçнă, анчах советсем коммуниссемсĕр пулмала, тенĕ. „Коммунисемсĕр советсем"—акă йепле пулнă ун чухне вырăс контр-револуци пуçĕн Милуковăн лозунгĕ. Контр-револуционерсем ĕç советсем пурринче анчах маррине, пуринчен ытла çак ĕç советсене кам йертсе пынинчен килнине ăнланса илнĕ.

Колхозсем çинчен те çавнах каламала. Хуçалăха организацилес ĕçре социалисăмла формă пулса тăракан колхозсем, вĕсене йертсе пырас ĕçре чăн-чăн револуционерсем, болшевиксем, коммуниссем тăраççĕ пулсан, хуçалăх строительствинче тĕлĕнмеле пысăк ĕçсем тума пултараççĕ. Тепĕр майлă та пулма пултарать—колхозсенче ĕçе ес-ерсем, меншевиксем, Петлура офицерĕсем, тĕрлĕрен шурăгвардейцăсем, деникинцăсем, колчаковцăсем туса пыраççĕ пулсан, колхозсем хăшпĕр вăхăта тĕрлĕрен контр-револуцилĕ ĕçсене хӳтĕлесе тăракан вăйсем те пулса тăма пултараççĕ. Кунта çакна асăрхамала: колхозсем унта советсене хирĕçле етемсем кĕрсе кайасран ирĕклĕ организаци форми пулса тăраççĕ тесе каламали çук, вĕсем малтанлăха контр-револуционерсене колхозсене хирĕç ĕçлемели питех те аван вырăн та пулса тăраççĕ. Хресченсем уйрăм хуçалăхсемпе пурăннă вăхăтра,— вĕсем уйрăмăн, пĕр-пĕринчен сапаланчăклă тăнă, çавăнпа хресченсем хушшинчи советсене хирĕçле етемсен контр-револуцилĕ ĕçĕсем палăрмалах ăнăçлă пулайман. Хресченсем колхоза куçнă хыççăн пĕтĕмпех урăхла картин пулса тăрать. Кунта хресченсем валли массăлă организацин хатĕр форми пур, вăл—колхозсем. Çавăнпа советсене хирĕçле етемсем колхозсене кĕрсе кайни тата вĕсен советсене хирĕçле ĕçĕсем кунта ăнăçлăрах пулма пултараççĕ. Паллах, советсене хирĕçле етемсем çаксене пурне те шута илеççĕ. Контр-револуционерсен пĕр пайĕ, сăмахран, Çурçĕр Кавказра, хăйех темскерле колхоз йевĕрлĕ йапала тума хăтланать, вĕсемпе

хăйĕн вăрттăн организацисене уççăн хўтĕлесе пураннӑт. Хăшпĕр районсенче, советсене хирĕçле ĕçлесе пыракан елементсене палăртса çĕмĕрсе тăкман çĕрсенче, советсене хирĕçле етемсем колхозсене хавассăнах кĕреççĕ, колхозра контр-револђуцилĕ ĕç йăви çавӑрас шутпа колхозсене мухтаççĕ те. Çавăн пекех çакă та паллă: советсене хирĕçле елементсен пĕр пайĕ хаљ хăйех колхозсем çинчен калаçу пуçарса колхозсем майлă шăлтарӑт, анчах колхозсенче коммунистсем ан пулччăр, тет. „Комунистсемсĕр колхозсем“—акă йепле лозунг çўрет хаљ советсене хирĕçле елементсем хушшинче. Кунта ĕç—организацин социалисăмла форми пулса тăракан колхозсем пурринче кăна мар, пуринчен малтан ĕç—çак формăна мĕнле содержани кĕрсе вырнаçнинче, пуринчен малтан ĕç—колхоз пуçĕнче *кам* тăнинче, вăл колхоза *кам* йертсе пынинче пулса тăрӑт.

Ленинисăм вĕрентнĕ тăрăх, колхозсем те, советсем пекех, организацилĕ формă йенчен илсен, хĕç-пăшал çех пулса тăраççĕ. Çав хĕç-пăшала хăшпĕр условисенче револђуцийе хирĕç те йама пулӑт. Ăна контр-револђуцийе хирĕç те йама пулӑт. Вăл рабочи класпа хресченсемшĕн ĕçлеме пултарӑт. Вăл хăшпĕр условисенче рабочи класпа хресченсен тăшманĕсемшĕн те ĕçлеме пултарӑт. Мĕн пур ĕç те кунта—çав хĕç-пăшал кам аллинче тăнинче, ăна кама хирĕç йанинче.

Çакна рабочисемпе хресченсен тăшманĕсем хăйсен клас сисĕмлĕхĕпе ăнланса илме пуçланă та ĕнтĕ.

Анчах, кућанмалăх, çакна пирĕн хăшпĕр коммунистсем ăнланса илеймеççĕ-ха.

Çавăншăн та вара, пирĕн хăшпĕр коммунистсем çак çăмăл йапалана ăнланса илеймен пирки,—çавăн пиркийех те,—епĕр çакăн пек картинсем куратпăр: хăшпĕр колхозсенче советсене хирĕçле елементсем тул йенчен лӑйăх урăхланса, маскă тăхăнса ĕçе йертсе туса пыраççĕ, унта вĕсем сăтăрлă ĕçсем, саботаж организацилеççĕ.

4) Йалти ĕçри çитменлĕхсен тăваттăмĕш сăлтавĕ вăл—вырăнсенчи чылӑй йулташсем кулаксене хирĕç кĕрешес фронта улшăнтарма пĕлменнинче, клас тăшманĕн сăн-сăпачĕ йулашки вăхăтра улшăннине, йалта клас тăшманĕн тактики улшăнни-

не курманнинче, çитĕнӳсем тăвас тесен çак улшăнусене май хамăрăн тактикăна та улăштарма кирлĕ пулнине пĕлменнинче пулаť. Тăшман хаљ лару-тăру улшăннине ăнланса илнĕ, йалти çĕнĕ йĕркен вăйĕпе хăватне ăнланса илнĕ, çакна ăнланнă хыççăн хăйĕн ĕç мелне, хăйĕн тактикине улăштарнă,-- вăл хаљ колхозсене хирĕç тӳрех атакă тăвассинчен вăрттăн, шалтан ишĕлтерекен ĕçе тума тытăннă. Епĕр пур—çакна ăнланса илеймен, çĕнĕ тапхăра асăрхаса çитереймен, çавăнпа клас тăшманне çук вырăнта шырама пăрахмастпăр, кулаксемпе кĕрешес çĕрте халĕ те кивелнĕ çăмăл тактикăнах тытса пыратпăр, анчах та вăл, çав тактикă, тахçанах кивелнĕ ĕнтĕ.

Клас тăшманне колхоз тулашĕнче шыраççĕ, ăна тискер сăн-питлĕ, пысăк шăллă, тачка мăйлă, аллине пăшал тытнă çын вырăнне хурса шыраççĕ. Епĕр плакатсем тăрăх пĕлекен кулака шыраççĕ. Анчах кунашкал кулак çĕр çинчен такçанах çухалнă ĕнтĕ. Хаљхи йалти кулаксемпе подкулачниксем, хаљхи совета хирĕçле елементсем вĕсем нумайăшĕ—«йăваш», «пылпа çу» çынсем, „çветойсем" пекех. Вĕсене колхозран инçех шырамала мар, вĕсем колхозсенчех лараççĕ, унта кладовшчиксем, завхозсем, счетоводсем, çекретарсем, т. ыт. те пулса ĕçлеççĕ. Вĕсем нихăçан та—„колхоз кирлĕ мар" тесе калас çук. Вĕсем колхоз „майлă". Анчах вĕсем колхозсенче пысăк саботажсем, сăтăрлă ĕçсем тăваççĕ, вĕсенчен вара колхозсене ырри пулмĕ. Вĕсем нихăçан та—„тыр-пул хатĕрлевĕ кирлĕ мар", тесе калас çук. Вĕсем тыр-пул хатĕрлевĕ „майлă". Вĕсем демагогла „кăна" хăтланаççĕ, колхозра выљăх-чĕрлĕх ваљљи ĕçре кирлинчен виçĕ хут пысăкрах фонд тума сĕнеççĕ, колхозра страхфонда кирлинчен виçĕ хут ытларах ӳстерсе тума ыйтаççĕ, колхозра ушкăнпа апатланас ĕç ваљљи кашни çын пуçне кунне 6 кĕренкерен пуçласа 10 кĕренкене çитиччен çăкăр хăвармала тума сĕнеççĕ, т. ыт. те. Паллах, çавнашкал „фондсем" туса пĕтерсе, ушкăнпа апатланма çакăн пек пысăк пайок хăварнă хыççăн, çакнашкал жуликла демагоги хыççăн, колхозăн хуçалăх тĕрекĕ касăлаť, тыр-пул хатĕрлевĕ ваљљи тырă йулмасť.

Çакнашкал вăрвар, çивĕч тăшмана витĕр курас тесен, демагогийе парăнас мар тесен, çивĕч револљуцилĕ сисĕмлĕх

пулни кирлĕ, клас тăшманĕн сăн-пичĕ çинчи маскăна туртса çурса, колхозниксене унăн чăн-чăн контр-революцилĕ сăн-питне кăтартса пама пĕлни кирлĕ. Анчах нумай-ши пирĕн йалта çакнашкал тума пултаракан коммуниссем? Коммуниссем час-часах çакнашкал клас тăшманĕсене тăрă шыв çине кăлармасçĕ çеç те мар, тата хăйсем те кулаксен жуликла демагогийенне кайса ӳксе, вĕсем хыççăн хӳрере сĕтĕрĕнсе пыркалаççĕ.

Çĕнĕ маскă тăхăннă клас тăшманне курман пирки, унăн мошеникла киревсĕр ĕçĕсене тăрă шыв çине кăларма пĕлмен пирки, пирĕн хăшпĕр йулташсем час-часах—тĕнчере кулаксем текех çук ĕнтĕ, кулаксене класĕпех пĕтерес политике тытса пынипе йалта совета хирĕçле елементсене пĕтерсе лартнă, çавăнпа та ни бољшевикла мар, ни советсене хирĕçле мар „нейтраллĕ“ колхозсем пуррипе те килĕшме пулаť, вĕсем хăйсемех, çтихийлĕнех совет влаçĕ йенне куçĕç, тесе хăйсене хăйсем лăплантараççĕ. Анчах кун пек шутлани питĕ пысăк йăнăш пулаť, йулташсем. Кулаксене çĕмĕрсе тăкнă, анчах вĕсене пĕтĕмпех пĕтереймен-ха. Апла çеç те мар, коммуниссем çăвара карса, кулаксем хăйсен çтихийлĕ аталанăвĕ йĕркипе хăйсемех вилĕм шăтăкне кĕрсе выртасса кĕтсе ларсан, вĕсене часах пĕтерес те çук. „Нейтраллĕ“ колхозсене илсен çапла калас пулаť: ун пек колхозсем тĕнчере çук, пулма та пултараймаççĕ. „Нейтраллĕ“ колхозсем вĕсем — нимĕн те курман куçлă çынсен фантазийĕ çех. Çĕршывра клас кĕрешĕвĕ çав тери çивĕччĕн пынă вăхăтра „нейтраллĕ“ колхозсем валљи вырăн çук, çавăн пек лару-тăрура колхозсем *йе* бољшевикла *йе* совета хирĕçле анчах пулма пултараççĕ. Епĕр пĕр-пĕр колхоза йертсе пымастпăр пулсан, çак вара вăл колхозсене совета хирĕçле елементсем йертсе пынине пĕлтерет. Кун пирки нимĕнле иккĕленӳ те пулма пултараймасť.

5) Йулашкинчен, хамăрăн йалти ĕçри çитменлĕхсен тата тепĕр сăлтавĕ. Вăл, çав сăлтав, коммуниссен колхоз строителстви ĕçĕнчи вырăнĕпе ответлăхне çителĕклĕ таран хак паманнинче, коммуниссен тыр-пул хатĕрлев ĕçĕнчи вырăнĕпе ответлăхне çителĕклĕ таран хак паманнинче пулаť. Тыр-пул хатĕрлевĕн йăвăрлăхĕсем çинчен каласас пулсан, коммуниссем

ответлăха йаланах хресченсем çине тийентереççĕ, пурин пирки те хресченсем айăплă теме тăраççĕ. Анчах ку пĕрре те тĕрĕс мар, пуçĕпех вырăнсăр сăмах. Хресченсен кунта нимĕн айăпĕ те çук. Сăмах ответлăхпа айăп çинчен пырать пулсан, вара ответлăхĕ пĕтĕмпех коммуниссем çине ӳкет, айăпне илес пулсан, вара айăплисем пĕтĕмпех хамăр, коммуниссем, пулатпăр.

Пирĕн Совет власĕ пек хăватлă, авторитетлă влас çĕр çинче урăх çук, пулман та. Пирĕн коммуниссен партийĕ пек хăватлă тата авторитетлă парти тĕнчере çук, пулман та. Пире колхозсен ĕçне колхозсен интересĕсем, патшалăх интересĕсем ыйтнă пек йĕркелесе пыма никам та чăрмантармасть, чăрмантарма та пултараймасть. Хăшпĕр чухне колхозсен ĕçне ленинисăм хушнă пек йĕркелесе пыма май килмест пулсан, хăшпĕр чухне чылай пысăк, каçармала мар йăнăшсемех тăватпăр пулсан, калăпăр, тыр-пул хатĕрлев йĕнĕпех,—вара çакăншăн хамăр, пĕр хамăр анчах айăплă.

Колхоз суту-илĕвĕн усал йенĕсене асăрхаса çитерейменнипе, чылай пысăк йăнăшсем тунăшăн—*епĕр* айăплă. Пирĕн чылай организацисем колхозсенчен уйрăлса ним тумасăр тăнăшăн, çтихийлĕхе парăннăшăн—*епĕр* айăплă. Пирĕн чылай йулташсем çаплах—колхозсем массăлă организаци форми пулнине ытлашши мала хунăшăн—*епĕр* айăплă, вĕсем кунта ĕç — формăра мар, колхозсене йертсе пырас ĕçе хамăр алла илсе, колхозсене йертсе пырас ĕçрен совета хирĕçле елементсене кăларса сирпĕтессинче пулса тăнине ăнланмаççĕ. Çĕнĕ лару-тăрăва асăрхаса çитерейменнишĕн, вăрттăн ĕçлекен, шалтан çĕмĕрме хăтланакан клас тăшманĕн çĕнĕ тактикине ăнланса илейменнишĕн—*епĕр* айăплă.

Ыйтасчĕ, ăçта кунта хресченсен айăпĕ?

Епĕ вăйланса, чечекленсе пыракан, патшалăх заданисене вăхăтра тултаракан, хуçалăх тĕлĕшĕнчен кунран кун тĕрекленсе пыракан чылай колхозсем пуррине пĕлетĕп. Тепĕр йенчен, епĕ çак асăннă колхозсемпе йунашарах, урăх йышши колхозсене те пĕлетĕп: вĕсен тыр-пул тухăçлăхĕ лешсемпе пĕр танах пулин те, вĕсем пĕр пек обйективлă условисенчех пурнаççĕ пулин те—хăрса, ишĕлсе пыраççĕ. Сăлтавĕ

мĕнре? Сăлтавĕ—малтанхи колхозсен ушкăнĕсене чăн-чăн коммуниссем йертсе пынинче, иккĕмĕш ушкăнне—шлепкесем йертсе пынинче. Чăнах та, вĕсен кĕсйисенче парти билечĕ пур ĕнтĕ, çавах та вĕсем шлепкесем.

Ыйтасчĕ, ăçта кунта хресченсен айăпĕ?

Коммуниссен ответлăхĕпе вĕсем мĕнле вырăнта тăмалине çителĕклĕ таран хак паман пирки,—хамăрăн йалти ĕçĕн çитменлĕхĕсене час-часах çук çĕрте шыраççĕ, çавăнпа та çитменлĕхсем çаплипех тăрса йулаççĕ.

Тыр-пул хатĕрлевĕнчи йăвăрлăхсен сăлтавне хресченсенче мар шырамала,—хамăрта, хамăр ĕретсенче шырамала. Мĕншĕн тесен влаçа *епĕр* тытса тăратпăр, патшалăх хатĕрĕсем *пирĕн* алăра, колхозсене йертсе пырас тивĕçлĕхе *пире* пӳрнĕ, йалти ĕçĕн пĕтĕм ответлăхне *епĕр* тытмала.

Çакнашкал ĕнтĕ пирĕн йалти ĕçсен çитменлĕхĕсен тĕп сăлтавĕсем.

Епĕ кунта ытлашши хăрушă, тĕссĕр картин ӳкерсе патăм пек, пирĕн йалти пĕтĕм ĕç те çитменлĕхсенчен кăна тытăнса тăрать пек, тесе шутлама пулĕ. Анчах та, вăл, паллах, тĕрĕс мар. Чăннипе илсен, пирĕн йалти ĕçре çитменлĕхсемпе пĕрлех, пысăк çĕнтерӳлĕ çитĕнӳсем те нумай. Анчах епĕ хамăн сăмахăн пуçламăшĕнчех: хамăрăн çитĕнӳсене тишкĕресси манăн задача кĕмест, епĕ йалти ĕçри çитменлĕхсем çинчен кăна калăп, терĕм. Çак çитменлĕхсене тӳрлетме пулать-и? Паллах, тӳрлетме пулать. Вĕсене епĕр çитес çывăх вăхăтрах тӳрлетсе çитерĕпĕр-и? Сăмах та çук, тӳрлетсе çитерĕпĕр. Кун пирки нимĕнле иккĕленӳ те пулма пултараймасть.

Епĕ МТС-семпе совхозсенче политикă пайĕсем туни çак çитменлĕхсене чи кĕске вăхăтрах пĕтермели татăклă майсенчен пĕри пулса тăрать тесе шухăшлатăп. (*Нумайччен пĕр чарăнмасăр тăвăллăн ал çупаççĕ*).

# КОЛХОЗНИК-УДАРНИКСЕН ПĔТĔМ СОЙУЗРИ ПĔРРЕМĔШ СЙЕСĔНЧЕ КАЛАНИ

1933 ç. 19 февраљте

Колхозниксемпе колхозницă йулташсем! Епĕ сирĕн сйесра сăмах калас тесе шутламанччĕ. Шутламан, мĕншĕн тесен ман умăн калană оратăрсем хăйсен сăмахĕсенче мĕн каламалисене пурне те каларĕç,—лайăх тата тĕллĕ каларĕç. Кирлĕ-ши вара çакăн хыççăн татах тухса калама? Анчах есĕр çине тăрсах ыйтатăр та,—вăй сирĕн алăра (*нумайччен алă çупаççĕ*),—манăн пăхăнас пулатť.

Кăшт уйрăм ыйтусем пирки калăп.

### 1. Колхозсен çулĕ—пĕртен пĕр тĕрĕс çул.

*Пĕрремĕш ыйту*—тĕрĕс-ши колхозсене кĕнĕ хресченсен çулĕ, тĕрĕс-ши колхоз çулĕ?

Çак ыйту пустvй ыйту мар. Есĕр, колхозсенчи ударниксем, колхозсем тĕрĕс çул çинче тăнă пирки иккĕленместĕр пулмала. Çавăнпа та, тен, сирĕншĕн çак ыйту ытлашши ыйту пек те туйăнма пултарĕ. Анчах пур хресченсем те сирĕн пек шухăшламаççĕ. Хресченсем хушшинче, вăл шутрах колхозниксем хушшинче те, колхоз çулĕ тĕрĕсси пирки иккĕлекеннисем сахал мар. Çакăнран нимĕнскер тĕлĕнмели те çук. Чăнах та, çынсем çĕршер çул кивĕлле пурăннă, кивĕ çулпа пынă, кулаксемпе çĕр улпучĕсем умĕнче, ростовщиксемпе çпекуљантсем умĕнче çурăмсене авнă. Хресченсем çав кивĕ кăпиталисăмла çула ырланă тесе калама çук. Анчах вăл, çав кивĕ çул—такăрлатнă, хăнăхнă çул пулнă, йепле те пулин урăхла, аванрах май пуррине никам та ĕçпе кăтартса пани пулман. Çитменнине тата буржуалă çĕршывсенче пуринче те çынсем халђ те çаплах кивĕлле пурнаççĕ... Сасартăк çав кивĕ çĕрĕк пурнăçа бољшевиксем çил-тăвăл пек пырса кĕреççĕ те, калаççĕ: вăхăт

çитнĕ кивĕ çула пăрахма, вăхăт çитнĕ çĕнĕлле, колхозла пурăнма тытăнма, вăхăт çитнĕ буржуалă çĕршывсенче пурте пурăннă пек мар, çĕнĕлле, ертеллешсе пурăнма. Мĕнлескер вăл çав çĕнĕ пурăнăç,—кам пĕлет ăна. Вăл кивĕ пурнăçран та йапăхрах ан пултăрччĕ. Кирек йепле пулсан та çĕнĕ çул—хăнăхман, такăрлатман тата вăл мĕнлине пĕлсех çитмен çул. Лайăхрах пулмĕ-ши кивĕ çул çинчех йулсан? Аванрах пулмĕ-ши çĕнĕ, колхозла çул çине куçма тăхтасан? Мĕн пулас-килессине пĕлмесĕрех пуçа пырса чикме кирлĕ-ши вара?

Акă мĕнле иккĕленӳсем турткалантараççĕ хаљхи вăхăтра ĕçхресченĕсен пĕр пайне.

Çав иккĕленӳсене сирсе йамала-и пирĕн? Çав иккĕленӳсене çутта туртса кăларса, вĕсем мĕн хак тăнине кăтартса памала-и пирĕн? Паллах, тумала пирĕн çав ĕçе.

Çапла вара, маларах лартнă ыйту—пустуй ыйту мар.

Çапла ĕнтĕ, колхоз хресченĕсем тăнă çул тĕрĕс-и?

Хăшпĕр йулташсем çĕнĕ çул çине, колхоз çулĕ çине куçас ĕç пирĕн виçĕ çул кайарах пуçланнă, тесе шухăшлаççĕ. Вăл кăшт çеç тĕрĕс. Паллах, колхозсене сарлакан, массăлă туса пырас ĕç пирĕн виçĕ çул кайарах пуçланнă. Çак ĕç, ăна пĕлетĕр, кулаксене çĕмĕрнипе, чухăнсемпе вăтамсен мĕлйунлă массисем колхозсем йенеле çаврăннипе пуçланчĕ. Çаксем пурте тĕрĕс. Анчах çав колхозсем йенеле массăлăн куçнине пуçарса йама алăра ăна тумали хăшпĕр условисем пурри кирлĕ пулнă, унсăрăн, пĕтĕмĕшпе каласан, нимĕнле массăлă колхоз йухă ĕ те пулма пултараймасť. Нимĕнрен малтан хресченсене колхоз çулĕ çине тăма ун чухне те, хаљ те пулăшса тăракан совет влаçĕ кирлĕ пулнă. Иккĕмĕшĕнче, çĕр улпучĕсемпе кăпиталиссене хăваласа кăларса йани кирлĕ пулнă, вĕсен савăчĕсене, çĕрĕсене туртса илсе, халăхăн харпăрхăйлăхĕ тумала пулнă. Виççĕмĕшĕнче, кулаксене çăварлăхламала, вĕсенчен машинăсемпе трактăрсене туртса илмеле пулнă. Тăваттăмĕшĕнче, машинăсемпе тата трактăрсемпе колхозсене пĕрлешнĕ чухăнсемпе вăтамсем çеç усă курмала тумала пулнă. Тата, йулашкинчен, çĕршыва индустрилемеле, колхоз хресченĕсене трактăрсем тата ытти

йалхуçалăх машинĕсем те йышлăн пама трактăр промышлĕннăçне туса ÿстермеле, йалхуçалăх машинĕсем тăвакан çĕнĕ савăтсем лартмала пулнă. Çак малтан тунă пысăк ĕçсемсĕр, виçĕ çул кайарах тунă пек, колхозсен çулĕ çине массăлăн куçасси çинчен шухăшламали те пулман.

Çапла вара, колхозсен çулĕ çине куçма нимрен малтан Октăбĕр револуци туса, капиталиссемпе çĕр улпучĕсене сирпĕтсе йамала, вĕсенчен çĕрпе савăтсем туртса илмеле, çĕнĕ промышлĕннăç тумала пулнă.

Октăбĕр револуцинчен пуçланчĕ те ĕнтĕ çĕнĕ çул çине, колхозсен çулĕ çине куçас ĕç. Вăл ĕç виçĕ çул кайарах тин çĕнĕрен вăйланса кайрĕ, мĕншĕн тесен Октăбĕр револуцинче хуçалăх тĕлĕшпе кĕрешсе илнĕ çĕнтерÿсем çав вăхăт тĕлне тин пĕтĕм сарлакăшĕпе palăрчĕç, асăннă вăхăт тĕлне тин епĕр çĕршыва индустрилессине малала йама пултартăмăр.

Халăхсен историйĕ сахал мар револуцисем пĕлет. Вĕсем Октăбĕр револуцийĕнчен пурте пĕр йенлĕ револуцисем пулнипе уйрăлса тăраççĕ. Ĕççыннисене експлоатациленин пĕр формисем експлоатацин урăх формисемпе çех улшăнса тăнă, анчах експлоатаци хăй çаплипех йулнă. Пĕр йышши експлоататăрсемпе пусмăрлакансем тепĕр йышши експлотатăрсемпе пусмăрлакансемпе улшăннă, анчах експлоататăрсемпе пусмăрлакансем хăйсем йулнă. Пĕр Октăбĕр револуцийĕ çеç—*кирек мĕнле* експлоатацийе те, *кирек мĕнле* експлоататăрсемпе пусмăрлакансене те пĕтерес тĕллев лартрĕ.

Чурасен револуцийĕ чура хуçисене пĕтернĕ, ĕççыннисене чурасем туса експлоатациленине пăрахăçа кăларнă. Анчах вĕсем выrăнне вăл крепоçтниксене, ĕççынисене крепăсла йĕркепе експлоатацилессине кăларса тăратнă. Пĕр експлоатăрсем тепĕр експлоататăрсемпе улшăннă. Чуралăх чухне „саккун" чура хуçисене чурасене вĕлерме ирĕк панă. Крепăсла йĕркесем чухне „саккун" крепоçтниксене крепăсри çынсене сутма „çеç" ирĕк панă.

Крепăсра пурăннă хресченсен револуцийĕ крепоçтниксене пĕтернĕ, експлотацин крепăсла формне пăрахăçа кăларнă. Анчах вăл çавсем выrăнне капиталиссемпе çĕр улпучĕсене лартнă, ĕççыннисене капиталиссемпе çĕр улпучĕсем експло-

атацилессине кăларса тăратнă. Пĕр експлоатататăрсем вырăнне тепĕр експлоатататăрсем тухса тăнă. Крепăсла йĕркесем чухне „саккун“ крепăсри çынсене сутма ирĕк панă. Капиталисăмла йĕркесем чухне „саккун“ ĕççынисене ĕç тивĕçменнипе асапланма, çука йулма, йухăнса пыма, выçăпа вилме „çеç“ ирĕк парат̆.

Пирĕн совет революцийĕ çеç, пирĕн Окт̆абĕр революцийĕ çеç ыйтăва ак çапла лартрĕ: пĕр йышши експлоататăрсене тепĕр йышшисемпе улăштарас мар, експлоатацин пĕр формине тепринпе улăштарас мар,—кирек мĕнле експлоатацийе те пĕтерес, кирек мĕнле експлоататăрсене пурне те, кирек мĕнле пуйансемпе пусмăрлакансене пурне те, киввисене те, çĕннисене те пĕтерес. (*Нумайччен ал çупаççĕ*).

Акă мĕншĕн ĕнтĕ Окт̆абĕр революцийĕ хресченсене çĕнĕ çул çине, колхоз çулĕ çине куçарас ĕçре малтанхи кирлĕ услови пулса тăрат̆, унсăрăн çак ĕçе тума çук.

Тĕрĕс тунă-ши хресченсем Окт̆абĕр революцишĕн тăрса? Çакна вĕсем тĕрĕс тунă. Вĕсем тĕрĕс тунă, мĕншĕн тесен Окт̆абĕр революци вĕсене çĕр улпучĕсемпе капиталиссене, ростовшчиксемпе кулаксене, усламçăсемпе çпекулантсене ĕнсе çинчен сирпĕтсе антарма пулăшнă.

Анчах çак вăл—ыйтăвăн пĕр йенĕ çеç. Пусмăрлакансене хăваласа йани, çĕр улпучĕсемпе капиталиссене хăваласа йани, кулаксемпе çпекулантсене çăварлăхлани—вăл пит лайăх. Анчах унпах сахал. Кивĕ тăлăсенчен татăклăнах хăтăлма експлоататăрсене çĕмĕрсе тăкнипех çителĕклĕ мар. Çакна тума тата çĕнĕ пурнăç тумала, ĕçхресченне хăйĕн пурнăçне пурлăх тĕлĕшпе те, культурă тĕлĕшпе те аванлатса пыма, кунран кун, çултан çул çӳлеле хăпартса пыма май паракан пурнăç тумала. Çакна тума йалта çĕнĕ йĕрке, колхозлă йĕрке тумала. Çакăнта ĕнтĕ ыйтун тепĕр йенĕ.

Кивĕ йĕрке çĕнĕ йĕркерен, колхозлă йĕркерен мĕнпе уйрăм-ха?

Кивĕ йĕрке чухне хресченсем пĕчченшерĕн ĕçленĕ, асаттесен ĕлĕкхи майĕсемпе кивĕ ĕç хатĕрĕсемпе ĕçленĕ, çĕр улпучĕсемпе капиталиссемшĕн, кулаксемпе çпекулантсемшĕн ĕçленĕ, выçăлă-тутăлă пурăнса ĕçленĕ, ытти çынсене

пуйтарнă. Çĕнĕ, колхоз йĕрки чухне хресченсем пĕрле, ертеллешсе ĕçлеççĕ, çĕнĕ ĕç хатĕрĕсемпе—трактăрсемпе, йалхуçалăх машинĕсемпе усă курса ĕçлеççĕ, хăйсемшĕн, хăйсен колхозĕсемшĕн ĕçлеççĕ, капиталиссемпе çĕр улпучĕсемсĕр, кулаксемпе çпекуљантсемсĕр пурнаççĕ, хăйсен пурнăçне пурлăх тĕлĕшпе те, куљтурă тĕлĕшпе те кунран кунах аванлатса пыма ĕçлеççĕ. Унта, кивĕ йĕрке чухне—буржуази правитĕлстви, вăл ĕçхресченĕсене хирĕç пуйансен хутне кĕрет. Кунта, çĕнĕ, колхоз йĕрки чухне, рабочисемпе хресченсен правитĕлстви, вăл мĕн пур тĕрлĕ пуйансене хирĕç рабочисемпе хресченсен хутне кĕрет. Кивĕ йĕрке капиталисăм патне илсе пыраť. Çĕнĕ йĕрке—социалисăм патне.

Акă сире икĕ çул, социалисăм çулĕпе капиталисăм çулĕ, малала—социалисăм патне, кайала—капиталисăм патне каймали çулсем.

Темскерле виççĕмĕш çул çине тăма май пур тесе шухăшлакан çынсем те пур. Çав никамшăн та паллă мар виççĕмĕш çул çине тăма хăшпĕр иккĕленекен, колхоз çулĕ тĕрĕссине пĕтĕмпех ĕненсе çитмен йулташсем уйрăмăнах хавас. Вĕсем пире кивĕ йĕрке патне,—хуçалăха пĕчченшерĕн, анчах капиталиссемпе çĕр улпучĕсемсĕр, тытса тăрасси патне,—кайала тавăрăнтарасшăн. Вĕсем пире хамăрăн хуçалăх йĕркинче кулаксемпе ытти вак капиталиссене „çеç" саккунлă йапала тесе пурăнма ирĕк партарасшăн. Чăннипе илсессĕн вăл виççĕмĕш мар, иккĕмĕш çул — капиталисăм патне каймали çул. Чăнахах та, мĕне пĕлтерет-ха вăл пĕччершерĕн хуçалăх тытса тăрасси патне кайала тавăрăнни, кулаксене ирĕк пани? Вăл—кулаксен пусмăрне, кулаксем хресченсене експлоатацилессине кайала тавăрса, кулаксене влаç панине пĕлтерет. Анчах пулаťи-ха кулаксене ирĕк панипе пĕрлех Совет влаçне те тытăнтарса хăварма? Çук, пулмасť. Кулаксене çĕнĕрен ирĕк пани кулаксен влаçне тăвасси патне, Совет влаçне пĕтересси патне илсе пымала,—апла пулсан, вăл буржуалă правитĕлствă тăвасси патне илсе пымала. Буржуалă правитĕлствă туни вара çĕр улпучĕсемпе капиталиссене кайала тавăрасси патне, капиталисăма кайала тавăрасси патне илсе пымала. Виççĕмĕш çул текенни вăл, чăннипе, иккĕмĕш çул,

капиталисăм патне кайала таврăнмали çул пулаť. Ыйтăр-ха хресченсенчен, — вĕсем кулаксен пусмăрне кайала тавăрасшăн-и, капиталисăм патне кайала таврăнасшăн-и, Совет влаçне пĕтерсе çĕнĕрен çĕр улпучĕсемпе капиталиссен влаçне лартасшăн-и? Ыйтса пăхăр-ха вĕсенчен, вара ĕçхресченсенчен ытларахăшĕ хăш çула пĕртен-пĕр тĕрĕс çул вырăнне шутланине пĕлĕр есĕр.

Çапла вара, икĕ çул çеç пур: *йе* малала, тăвала—çĕнĕ, колхоз йĕрки патне, *йе* кайала, анатала—кивĕ, кулаклакапиталисăмла йĕрке патне. Виççĕмĕш çул çук.

Ĕçхресченĕсем капиталисăмла çула йышăнманнипе, колхозсем тăвас çул çине тăнипе—тĕрĕс ĕç тунă.

Хăшĕсем колхоз çулĕ тĕрĕс çул, анчах вăл йăвăр çул, теççĕ. Çапла калани кăшт çеç тĕрĕс. Паллах, вăл çул çинче йăвăрлăхсем пур. Лайăх пурнăç ахаљ пулмасť. Анчах чи пысăк йăвăрлăхсенчен ĕнтĕ иртнĕ, хаљ сирĕн умра тăракан йăвăрлăхсем—чаранса тăрса калаçмалăх та çук. Кирек мĕнле пулсан та, рабочисем 10—15 çул ĕлĕкрех тӳссе иртернĕ йăвăрлăхсемпе танаштарсассăн, сирĕн хаљхи йăвăрлăхсем, колхозник йулташсем, ача вăййи пек çеç туйăнаççĕ. Сирĕн оратăрсем кунта тухса каланă чух Лениградри, Мускаври, Харкăври, Донбасри рабочисене мухтарĕç. Вĕсем калаççĕ: вĕсен, рабочисен, çитĕнӳсем пур, пирĕн, колхозниксен, çитĕнӳсем вĕсеннинчен нумай сахалтарах. Мана сирĕн оратăрсем сăмахĕсенче йулташла кĕвĕçни палăрнă пек туйăнаť: çапла, пирĕн те, хресченсен-колхозниксен—Ленинградри, Мускаври, Донбасри, Харкăври рабочисенни пекех çитĕнӳсем пулсассăн йепле лайăх пулнă пулĕччĕ... Çаксем пурте лайăх. Анчах Ленинградрипе Мускаври рабочисене çав çитĕнӳсем мĕн хака ларнине, вĕсем йулашкинчен çав çитĕнӳсене тума мĕн-мĕн тӳснине пĕлетĕр-и есĕр? Епĕ рабочисем 1918 çулта йепле пурăннине хăшпĕр примерсене илсе каласа пама пултарăттăм, ун чухне рабочисене ерни-ернипе пĕр татăк çăкăр та паман, аш-какайпа ытти çимĕçсем çинчен калаçмали те çук. Çав вăхăтсенче Ленинградрипе Мускаври рабочисене воçмушкăшар, ăна та пулин хывăхпа çурмала, хура çăкăр пама май килнĕ кунсене телейлĕ кунсем тесе шутланă. Вăл

пĕр уйăх çеç мар, çур çул та анчах мар, икĕ çул хушши çавăн пек пулнă. Анчах рабочисем тӳснĕ, пуççене усман, мĕншĕн тесен вĕсем лайăхрах вăхăтсем çитессине, вара вĕсем пит пысăк çитĕнӳсем тăвассине пĕлнĕ. Чăнах та акă вара,—есĕр куратăр, рабочисем йанăшман. Хăвăрăн йăвăрлăхсене, çитменлĕхсене пула тӳснисене рабочисем тӳссе иртернисемпе танлаштарса пăхăр-ха, вара есĕр вĕсем çинчен чарăнса тăрсах калаçма та кирлех марри не курăр.

Мĕн кирлĕ-ха колхоз йухăмне малала йама, колхоз строительствине пĕтĕм вăйпа сарса пыма?

Çакна тума чи малтан колхозăн çителĕклĕ таран ĕçлеме йурăхлă çĕр пулни кирлĕ. Пур-и вăл сирĕн? Пур. Пурте пĕлеççĕ: пĕтĕм лайăх çĕрсене колхозсене панă, вăл çĕрсене колхозсем çумне тĕплĕ çирĕплетнĕ. Çапла вара, колхозниксем вăл çĕре, вăл урăх çынсен аллине куçассинчен хăрамасăрах, мĕн кирлĕ таран ĕçлеме, ăна лайăхлатма пултараççĕ.

Çакна тума, иккĕмĕшĕнче, колхозниксем трактăрсемпе, машинăсемпе усă курма пултарни кирлĕ. Пур-и вĕсем сирĕн? Пур. Пурте пĕлсе тăраççĕ; пирĕн трактăр савăчĕсемпе йулхуçалăх машинĕсем тăвакан савăтсем чи малтан тата пуринчен ытла колхозсемшĕн ĕçлеççĕ, вĕсене хаљхи вăхăтра мĕн пур çĕнĕ ĕçхатĕрĕсем туйантарса тăраççĕ.

Çакна тума, йулашкинчен, колхоз хресченĕсене пур йенчен те—çынсемпе те, укçапа та пулăшакан, клас тăшманĕсем хыççăн кайакансене колхозсене çĕмĕрме чаракан правительствă кирлĕ. Пур-и сирĕн çавăн пек правительствă? Пур. Вăл рабочисемпе хресченсен совет правительстви йатлă. Кăтартса парăр-ха есĕр мана капиталиссемпе çĕр улпучĕсене мар, кулаксемпе пуйансене мар, ĕçхресченĕсене сыхлакан правительствăлă урăх çĕршыв. Çакнашкал çĕршыв тĕнчере çук, пулман та. Пирĕн совет çĕршывĕнче çеç рабочисемпе хресченсемшĕн, колхозниксемшĕн, хуларипе йалти мĕн пур ĕççыннисемшĕн хытă тăракан, мĕн пур пуйансене, експлоататăрсене хирĕç кĕрешекен правительствă пур. (*Нумайччен ал çупаççĕ*).

Çапла ĕнтĕ, колхоз строительствине сарса йама, кивĕ тăлăсенчен пĕтĕмпех хăтăлма сирĕн мĕн кирли пурте пур.

Сирĕн пĕр ĕç çеç тумала—пĕтĕм кăмăлтан ĕçлемеле, колхозри тупăшсене ĕçлени тăрăх валеçмеле, колхоз пурлăхне сыхламала, трактăрсемпе машинăсене тирпейлĕ тыткаламала, лашасене лайăх пăхмала, хăвăрăн рабочисемпе хресченсен правитĕлствине памалисене вăхăтра парса тăмала, колхозсене çирĕплетмеле, колхозсенчен унта хĕсĕнсе кĕнĕ кулаксемпе подкулачниксене кăларса сирпĕтмеле.

Епĕ çав йăвăрлăхсене çĕнтерме, урăхла каласан, пĕтĕм кăмăлтан ĕçлеме тата колхоз пурлăхне сыхлама ытлашши пит йăвăрах мар тенипе есĕр килĕшетĕр пулмала. Есĕр вĕт хаљ пуйансемшĕн мар, експлоататăрсемшĕн мар, хăвăршăн, хăвăрăн колхозсемшĕн ĕçлетĕр.

Есĕр куратăр, колхоз çулĕ, социалисăм çулĕ ĕçхресченсемшĕн пĕртен-пĕр тĕрĕс çул пулса тăраĭ.

## 2. Пирĕн çывăхри задачă—пур колхозниксене те пуйан пурнакан тăвасси

*Иккĕмĕш ыйту*—çĕнĕ çулпа, хамăрăн колхоз çулĕпе пырса епĕр мĕн турăмăр, тата малашнехи 2—3 çул хушшинче мĕн тума шутлатпăр?

Социалисăм—аван йапала. Телейлĕ социалисăмла пурнăç—тавлашмали çук аван пурнăç. Анчах çаксем пуртемалашне пулассисем. Тĕп ыйту хаљхи вăхăтра епĕр ўлĕмрен мĕн тума пултарассинче мар. Тĕп ыйту епĕр ĕнтĕ хаљхи вăхăтра мĕн туса çитерниниче. Хресченсем колхоз çулĕ çине тăчĕç. Çак пит те лайăх. Анчах мĕн тупнă-ха вĕсем хăйсене ваљљи çак çул çинче? Мĕн тунă-ха епĕр туйса илмелĕхех колхоз çулĕпе пырса?

Епĕр чухăнсен мĕлйунлă массисене колхозсене кĕме пулăшас ĕçе турăмăр. Чухăнсен мĕлйунлă массисем колхоза кĕрсе унта лайăхрах çĕрпе, лайăхрах ĕçхатĕрĕсемпе усă курса, вăтамсен пурнăçĕ таран хăпарчĕç. Епĕр чухăнсен мĕлйунлă, ĕлĕк выçăлă-тутăлă пурăннă массисене хаљ вăтамсен пурнăçĕпе, çителĕклĕ пурнăçпа пурнакан турăмăр. Епĕр хресченсем чухăна тата кулака тухса пынине пĕтертĕмĕр, кулаксене çĕмĕрсе тăкрăмăр, чухăнсене колхозсенче хăйсен ĕçĕн хуçийĕ пулма, вăтамсем пулма пулăшрăмăр.

Мĕнле тăнă-ха ĕçсем колхоз тăвас ĕçе сарса йариччен, пĕр тăватă çул кайарах? Кулаксем пуйса, çӳлеле хăпарса пынă. Чухăнсем кулаксен пусмăрне лексе, çука йулса кĕлмĕçленсе йухăнса пынă. Вăтамсем çӳлеле кулаксем патнеле хăпарма тăрмашланнă, анчах кашни хутах вĕçерĕнсе кайса айалала ӳкнĕ, кулаксен кулли пулса чухăнсен ĕречĕсене йышлагнă. Чухласа илме йăвăр мар, çавнашкал пурнăçра кулаксем çеç, тен тата тĕреклĕ хуçалăхсенчен хăшпĕрисем, усă курнă. Йалта кашни çĕр кил пӳçне 4—5 кулак килĕсем, 8 йе 10 тĕреклĕ килсем, 45—50 вăтамсен килĕсем тата 35 чухăнсен килĕсем пулнă. Çапла вара, мĕн пур хресченсенчен чи сахалтан та 35% чухăнсем пулнă, вĕсен кулак пусмăрне тӳсмеле пулнă. Вăтам хресченсен вăйсăр сийĕсем çинчен епĕ каламастăп та, вăтам хресченсем хушшинче вĕсем çурри ытла пулнă, вĕсем хăйсен пурнăçĕ тĕлĕшĕнчен чухăнсенчен нумай мар уйрăм тăнă, вĕсем те кулаксен пусмăрĕнче пурăннă.

Епĕр колхоз тăвас ĕçе сарса çав пăтранупа тĕрĕсмарлăха пĕтертĕмĕр, кулаксен пусмăрне çĕмĕртĕмĕр, чухăнсен пĕтĕм массине колхозсене кĕртрĕмĕр, унта вĕсене çителĕклĕ пурнăç тума май патăмăр, колхоз çĕрĕпе, колхозсене паракан çăмăллăхсемпе, трактăрсемпе, йалхуçалăх машинĕсемпе усă курма пултаракан вăтамсем таран хăпартрăмăр.

Мĕне пĕлтерет-ха çак? Вăл 20 мĕлйунран кайа мар хресчен халăхне, 20 мĕлйунран кайа мар чухăнсене кĕлмĕçлĕхрен тата çука йулса йухăнасран хăтарнине, кулак пусмăрĕнчен хăтарнине, колхозсене пула вĕсене çителĕклĕ пурнакан çынсем тунине пĕлтерет.

Çак вăл пысăк çитĕнӳ, йулташсем. Çакăн пек çитĕнĕве тĕнче нихçан та пĕлмен, тĕнчери нихăш патшалăх та тăвайман.

Акă сире колхоз тăвас ĕç куçа курăнмалăхах панă çĕнтерӳсем, хресченсем колхозсен çулĕ çине тухса тунă çитĕнӳсем.

Анчах çак пирĕн *малтанхи* утăм çеç, пирĕн колхоз тăвас ĕçĕн çулĕ çинчи *малтанхи* çитĕнӳ çеç.

Пирĕн çав малтанхи утăм çинчех, çав малтанхи çитĕнӳ тунипех чарăнмала, тесе шухăшлани тĕрĕс мар пулнă пулĕччĕ. Çук, йулташсем, епĕр çав çитĕнĕве тунипех чарăнма пултарай мастпăр. Малала кайма, вара колхозсене татăклă-

нах çирĕплетме пирĕн *иккĕмĕш* утăм йарса пусмала, пирĕн *çĕнĕ* çитĕнӳ тумала. Мĕнле утăм пулмала-ши çав иккĕмĕш утăм? Вăл—колхозниксене,—чухăнсем пулнисене те, вăтамсем пулнисене те,—тата çӳлерех хăпартасси пулаť. Вăл—*колхозниксене пурне те пуйан пурнакансем тăвасси пулаť.* Çаплах, йулташсем, пуйан пурнакансем тăвасси. (*Нумайччен ал çупаççĕ*).

Епĕр колхозсене пула чухăнсене вăтамсем таран хăпартма пултартăмăр. Вăл питĕ лайăх. Анчах унпах сахал. Пирĕн хаљ тата тепĕр утăм малала йарса пусмала, вара пур колхозниксене те,—чухăнсем пулнисене те, вăтамсем пулнисене те,—пуйан пурнакансем таран хăпартмала. Çакна пурнăçа кĕртме пулаť, кирек мĕнле пулсан та тăвасах пулаť пирĕн çакна. (*Нумайччен ал çупаççĕ*). Çак хамăрăн тĕллеве пурнăçа кĕртме пирĕн хаљ мĕн кирлисем пурте пур. Хаљхи вăхăтра епĕр машинсемпе, трактăрсемпе йапăх усă куратпăр. Çĕре те епĕр лайăхах ĕçлеместпĕр. Машинăсемпе, трактăрсемпе усă курассине лайăхлатсанах, çĕре лайăхрах ĕçлеме пуçăнсанах епĕр хамăр тăвакан продуктсен хисепне икĕ хут, виçĕ хут ӳстерме пултаратпăр. Çак вара мĕн пур колхозниксене пуйан пурнакан колхоз уйхирĕсен ĕçлекенĕсем тума ытлашшипех çителĕклĕ.

Ĕлĕк чухне мĕнле тăнă-ха ĕç пуйан пурнакансем тĕлĕшпе? Пуйан пурнакан пулма хăйĕн кӳршисене çаратса кӳрентермеле пулнă, вĕсене експлотацилемеле, вĕсене хаклăраха сутмала, илессине вĕсенчен йӳнерехе илмеле пулнă, батраксенчен хăшĕсене тара тытмала, вĕсене чылай експлоатацилемеле, капитал пухмала пулнă, çапла майпа çирĕпленсе,—вара кулака тухмала пулнă. Ĕлĕк, уйрăм хуçалăхсенче пурăннă чухне, чухăнсемпе вăтамсем пуйан пурнакансене шанманни, вĕсене курайманни çавăнтан килнĕ. Хаљ ĕç урăхла тăраť. Хаљ условисем те урăх. Хаљ ĕнтĕ колхозниксене пуйан пурнакансем пулма кӳршĕсене тивни йе вĕсене експлоатацилени пĕртте кирлĕ мар. Хаљ ĕнтĕ кама та пулин експлоатацилеме те çăмăл мар, мĕншĕн тесен хаљ пирĕн текех çĕр уйрăм çынсен аллинче тăни те йе çĕре тара парас-илес йĕрке те çук, машинăсемпе трактăрсем

патшалăх аллинче, мул тытакан ҫынсем те хаљ колхозра чапра мар. Унашкал йăла пулнă вăл, анчах ĕмĕрлĕхех куҫран ҫухалнă. Колхозниксене пуйан пурнакансем пулма хаљ пĕр йапала ҫеҫ кирлĕ—колхозра пĕтĕм кăмăлтан, тӳрĕ ĕҫлемеле, трактăрсемпе, машинсемпе пĕлсе, тĕрĕс усă курмала, ĕҫвыљăхĕсемпе тĕрĕс усă курмала, ҫĕре тĕрĕс ĕҫлемеле, колхоз пурлăхне сыхламала.

Хăш чухне ҫапла калаççĕ: социалисăм пулсан,—мĕн тума-ха ĕҫлемеле? Ĕлĕк те ĕҫленĕ, хаљ те ĕҫлетпĕр—ĕҫлеме пăрахма вăхăт мар-и? Унашкал сăмахсем, йулташсем, пĕртте тĕрĕс мар. Ҫак — кахалсен философийĕ, тӳрĕ ĕҫлекен ĕҫҫыннисен философийĕ мар. Социалисăм пĕртте ĕҫлеме кирлĕ маррине пĕлтермест. Пĕтĕмпех урăхла, социалисăм—ĕҫленипе ӳссе тĕрекленсе пырать. Социалисăмпа ĕҫе пĕр-пĕринчен уйăрма ҫук. Ленин, пирĕн аслă учитлĕ, калані: „Кам ĕҫлемест, вăл ҫимест“, тенĕ. Мĕне пĕлтерет ҫак, кама хирĕҫ пыраççĕ-ха Ленин сăмахĕсем? Експлоататăрсене хирĕҫ, хăйсем ĕҫлемесĕр урăххисене ĕҫлеттерсе ҫынсен ĕҫĕпе пуйакансене хирĕҫ пыраççĕ вĕсем. Тата кама хирĕҫ? Тата хăйсем кахалланакан, ытти ҫынсем ĕҫленинчен усă курма ăмсанакан ҫынсене хирĕҫ. Социалисăм кахалланса пурăнма мар, пур ҫынсем те ыттисемшĕн мар, пуйансемшĕн мар, експлоататăрсемшĕн мар, — хăйсемшĕн, обчăшăн тӳрĕ ĕҫлеме хушать. Епĕр хамăршăн, хамăр колхозсемшĕн тӳрĕ ĕҫлесессĕн—вара епĕр 2—3 ҫул хушшинче пур колхозниксене те,—чухăнсем пулнисене те, вăтамсем пулнисене те,—пуйан пурнакансем таран хăпартма, нумай ҫимĕҫсемпе усă курса, чăнахах та куљтурлă пурнакан ҫынсем тума пултарăпăр.

Ҫакăнта ĕнтĕ пирĕн ҫывăхри задачă. Ҫакна епĕр пурнăҫа кĕртме пултаратпăр, ҫакна пирĕн кирек мĕнле пулсан та пурнăҫа кĕртмелех. (*Нумайчен ал ҫупаççĕ*).

### 3. Уйрăм асăрхаттарусем

Хаљ ĕнтĕ хăшпĕр уйрăм асăрхаттарусем патне куҫăп.

Чи малтанах пирĕн йалти *партийцăсем* ҫинчен. Сирĕн хушăра партире тăракансем те пур, анчах партире тăманнисем

ытларах. Çак вăл, сиеса партире тăманнисем партире тăраканнисенчен ытларах килни—питĕ лайăх, мĕншĕн тесен пирĕн ĕçе чи малтан партире тăманнисене хутшăнтармала. Партире тăман колхозниксем çине большевикла пăхакан коммунисcем сахал мар. Анчах хăйсем партире тăнипе мăнкăмăлланса пуçĕсене çӳле каçăртакан, партире тăманнисене хăйсем патне çывăха та йаман партийцăсем те пур. Çак лайăх мар, сийенлĕ те. Большевиксен вăйĕ, коммуниссен вăйĕ—вĕсем хамăр партийе партире тăман мĕлйун йышлă активпа çыхăнтарса тăма пĕлнивче. Епĕр, большевиксем, партире тăман мĕлйун йышлă рабочисемпе колхозниксен шанчăкне парти йенне çавăрма пĕлмен пулсан, хал туна çитĕнӳсене тăвайман пулăтăмăр. Мĕн кирлĕ-ха çакна валли? Çакна валли партире тăракансем партире тăманнисенчен уйрăлса тăманни, партире тăракансем хăйсен партилĕ хуппийĕ ăшне хупăнса ларманни, вĕсем хăйсем партире тăнипе мăнкăмăлланманни, партире тăманнисен сассине итлени, вĕсем хăйсем партире тăманнисене вĕрентнипех чарăнманни, хăйсем те вĕсенчен вĕренни—кирлĕ.

Партире тăракансем пĕлĕтрен ӳкмеççĕ, ăна манма йурамасть. Астăвас пулать, партире тăракансем хăйсем те хăçан та пулин пурте партире тăман çынсем пулнă. Пайан вăл партире тăман çын, ыран партире тăракан çын пулать. Мĕн пирки-ха вара унта мăнкăмăлланса пуçа ывăтмала? Пирĕн хушăра, ватă большевиксем хушшинче, партире çирĕм-вăтăр çул ĕçлекен çынсем те сахал мар тупăнаççĕ. Анчах епĕр хамăр та вĕт тахçан чухне партире тăман çынсем пулнă. Çирĕм-вăтăр çул ĕлĕкрех ун чухнехи партийцăсем пире нимĕн выранне те хуман пулсан, парти çывăхне йаман пулсан, вара пирĕнтен мĕн пулнă пулĕччĕ-ха? Тен епĕр темиçе çуллăха партирен айакра пулнă пулăттăмăр. А вĕт епĕр, ватă большевиксем,—чи йулашки, чи начар çынсем мар вĕт, йулташсем. (*Савăнăçлăн хусканаççĕ. Нумайччен ал çупаççĕ*).

Акă мĕншĕн пирĕн партийцăсен, пирĕн халхи çамрăк партийцăсен, хăш чухне партире тăманнисем умĕнче хăйсен сăмсисене çӳле каçăртакансен, çаксене пурне те астăвас пулать; астăвас пулать, мăнкăмăлланса пуçа çӳле утни мар, хăйне мăнна хумасăр ĕçлени хитрелетсе тăрать большевика.

Хаљ пĕр-ик сăмах *хĕрарăмсем çинчен, колхозницăсем çинчен.* Колхозсенче хĕрарăм ыйтăвĕ—пысăк ыйту, йулташсем. Епĕ сирĕнтен нумайăшĕсем хĕрарăмсене тивĕçлĕ хак паманнине, çитменнине тата вĕсенчен кулнине пĕлетĕп. Анчах вăл йăнăш, пысăк йăнăш, йулташсем. Ĕç кунта хĕрарăмсем пĕтĕм халăхăн çурри пулса тăнинче çеç мар. Ĕç, чи малтан, йертсе пыракан вырăнсенче ĕçлеме колхоз йухăмĕ пит лайăх, пултарулă хĕрарăмсене нумай палăртса кăларнинче. Сйес çине, унăн йышĕ çине пăхăр-та, вара есĕр хĕрарăмсем такçанах кайа йулнисен ĕретĕнчен малта пыракансен шутне куçнине курăр. Колхозсенче хĕрарăмсем—пысăк вăй. Çак вăйа усăсăр пытарса усрани айăплă ĕç туни пулаť. Пирĕн ĕç—кохозсенче хĕрарăмсене малала кăларасси, вăл вăйа ĕçе хутшăнтарасси пулаť.

Пĕлетпĕр, Совет влаçĕн нумайах та пулмасť колхозницăсемпе пĕртаках хирĕçмели ĕç пулчĕ. Ку ĕç ĕне пирки тухса кайнă ĕç. Анчах хаљ ĕнтĕ ĕне пирки ĕç татăлнă, хирĕçтерекен ĕç те сӳрĕлнĕ. (*Нумайччен ал çупаççĕ*). Хаљ ĕнтĕ колхозниксен йышлăрах пайĕн кашни кил пуçне пĕрер ĕне пур,—епĕр ăна тума пултартăмăр. Тата пĕр çул, ик çул иртĕ,—вара есĕр ун чухне хăйĕн ĕнисĕр пĕр колхознике те тупаймăр. Ĕнтĕ епĕр, бољшевиксем, пур колхозниксен те пирĕн пĕрер ĕне пултăр тесе тăрăшăпăр тăрăшăпăрах (*Нумайччен ал çупаççĕ*).

Колхозницăсем çинчен хăйсем çинчен çакна калас пулаť: вĕсен колхозсем хĕрарăмсемпĕн мĕнле вăй пулса тăнине, мĕнле вырăн йышăнса тăнине асра тытмала, вĕсем колхозра çеç арçынпа пĕр тан ура çине тăма пултарнине асра тытмала. Колхозсемсĕр—танлăх çук, колхозсенче—танлăх. Колхозницăсем çакна асра тытчăр, вĕсем колхоз йĕркине куçсене сыхланă пекех сыхлаччăр. (*Нумайччен ал çупаççĕ*).

Икĕ сăмах колхозсенчи *комсомолĕцсемпе комсомолкăсем* çинчен. Çамрăксем—пирĕн малашлĕх, пирĕн шанчăк, йулташсем. Çамрăксен пирĕн вырăна, стариксен вырăнне тăмала. Вĕсен пирĕн йалава вĕçне çитеччен çĕнтеричченех çĕклесе пымала. Хресченсем хушшинче кивĕ йăвăрлăха йатса пыракан, кивĕ йăласене, ĕлĕкхи пурнăçа аса илнисене йăвăррăн çĕклесе пыракан стариксем сахал мар. Паллах, вĕсем парти хыççăн, Совет

влаҫӗ хыҫҫӑн йаланах ӗлкӗрсе пыраймаҫҫӗ. Пирӗн ҫамрӑксем апла мар. Вӗсем кивӗ йӑвӑрлӑхран таса, вӗсем Ленин халаласа хӑварнисене никамран ҫӑмалтарах ӑнланса пыраҫҫӗ. Ҫавӑнпа та ӗнтӗ, ҫамрӑксем Ленин халаласа хӑварнисене никамран та ҫӑмӑлтараххӑн ӑнланса пынӑ майӗпе, вӗсен кайа йулакансене тата иккӗленекенсене малала илсе пымала. Чӑнахах та, вӗсен пӗлӳ ҫитмест. Анчах пӗлӳ вӑл ӗҫлесе тупмали йапала. Пайан вӑл ҫук, ыран пулаӗ. Ҫавӑнпа задачӑ—ленинисӑма вӗренесси, татах та вӗренесси пулаӗ. Комсомолӗц тата комсомолкӑ йулташсем! Вӗренӗр большевисӑма, йертсе пырӑр иккӗлекенсене малала! Халапа сахалтарах ҫаптарӑр, ытларах ӗҫлӗр,—вара сирӗн чӑнах та ӗҫ тухӗ. (*Ал ҫупаҫҫӗ*).

*Уйрӑм хуҫалӑхпа пурнакансем* ҫинчен пӗртакках. Кунта уйрӑм хуҫалӑхпа пурнакансем ҫинчен сахал каларӗҫ. Анчах ҫак вӑл—вӗсем текех ӗнтӗ ҫут тӗнчере ҫуккине пӗлтермест. Ҫук, апла мар. Уйрӑм хуҫалӑхпа пурнакансем пур, вӗсене шутран кӑларса пӑрахма йурамаӗ, мӗншӗн тесен вӗсем пирӗн ыранхи колхозниксем. Епӗ пӗлетӗп, уйрӑм хуҫалӑхпа пурнакансенчен пӗр касси пӗтӗмпех пӑсӑлса кайнӑ, ҫпекуляцийе йарӑннӑ. Пирӗн колхозниксем уйрӑм хуҫалӑхпа пурнакансене колхоз ӗретне пит тӗплӗн пӑхса илни йе хӑш чухне тата пачах илменни ҫавӑнтан килет пулмала, вӑл, паллах, тӗрӗс, ӑна хирӗҫ калани пулман та, пулма та пултараймаӗ. Анчах уйрӑм хуҫалӑхпа пурнакансен тепӗр пайӗ, йышлӑрах пайӗ пур, вӗсем ҫпекуляцийе йарӑнман, хӑйсене валли ҫӑкӑр тӳрӗ, усӑлӑ ӗҫпе тупаҫҫӗ. Ҫав уйрӑм хуҫалӑхсем, тен, колхоза кӗресрен пӑрахӑҫах та мар пулӗ. Анчах вӗсене, пӗр йенчен, хӑйсем колхоз ҫулӗ тӗрӗсси пирки иккӗленни, тепӗр йенчен—колхозниксем хушшинче уйрӑм хуҫалӑхпа пурнакансене хирӗҫ шӑртланни пурри кансӗрлесе тӑраӗ.

Паллах, ку тӗлӗшпе колхозниксем мӗншӗн апла хӑтланнине ӑнланмалӑх пур, ҫавӑнпа тӳрех айӑплама ҫук. Ҫак иртнӗ ҫулсем хушшинче уйрӑм хуҫалӑхпа пурнакансем сахал мар вӗсене кӳрентернӗ, тата вӗсенчен кулнӑ. Анчах кӳрентернисемпе кулнисем кунта ӗҫе кирлӗ пек тума чаракан вырӑнта пулмала мар. Кӳрентернисене манма пӗлмен, хӑ-

йĕн шухăш-кăмăлĕсене колхоз ĕçĕн интересĕсенчен çӳле хуракан çын—начар йертсе пыракан пулать. Есĕр йертсе пыракансем пулас тетĕр пулсан, сирĕн уйрăм хуçалăхпа пурнакансенчен хăшпĕрисем сире хăвăра кӳрентернисене манма пĕлес пулать. Икĕ çул кайарах епĕ Атăл тăрăхĕнчи пĕр тăлăх хресчен хĕрарăмĕнчен çыру илтĕм. Вăл мана колхоза илмеççĕ, тесе жалăбă панăччĕ, манран пулăшу ыйтнăччĕ. Епĕ колхозран ыйтса йатăм. Колхозран ман пата: епĕр ăна колхоза илме пултараймастпăр, мĕншĕн тесен вăл колхоз пухăвĕнчен мăшкăланă, тесе пĕлтерчĕç. Мĕнле пулнă-ха вара çак? Акă çапла иккен: хресченсен пухăвĕнче колхозниксем уйрăм хуçалăхсене колхоза кĕме чĕннĕ, çавăн чухне çапла чĕннине хирĕç çак тăлăх арăм кĕпе аркине çĕкленĕ те: мейĕр сире колхоз, илĕр, тенĕ. (*Кулса хумханаççĕ*). Паллах, вăл тĕрĕс туман, пухуран мăшкăланă. Анчах çулталăк иртнĕ хыççăн вăл пĕтĕм кăмăлтанах ӳкĕннĕ, хăйĕн йăнăшне йышăннă пулсан, ăна колхоза илмесĕр тăма йурать-и? Епĕ ăна илмесĕр тăма йурамасть тесе шухăшлатăп. Епĕ вара колхоза çавăн пекех çырса йатăм. Тăлăх арăма колхоза илнĕ Мĕн пулнă-ха вара? Вăл халь колхозра кайа йулса мар, малта пырса ĕçлет иккен. (*Ал çупаççĕ*).

Акă ĕнтĕ сире йертсе пыракансен, вĕсем чăнахах та йертсе пыракансемех пулас теççĕ пулсан, ĕç интересĕшĕн кирлĕ чух кӳрентернисене манма пĕлмели çинчен калакан тепĕр пример.

Уйрăм хуçалăхлă хресченсем çинчен пĕтĕмĕшпе те çавнах каламала. Епĕ колхоза илнĕ чух тĕплĕн пăхса илессине хирĕç мар. Анчах епĕ пур уйрăм хуçалăхсемшĕн те, вĕсем мĕнлине, камне пăхмасăрах, колхозсен алăкĕсене хупнине хирĕç. Вăл пирĕн, большевиксен, политикĕ мар. Колхозниксен—вĕсем хăйсем те нумай пулмасть уйрăм хуçалăхлă хресченсем пулнине манас пулмасть.

Йулашкинчен, пĕр-ик сăмах *Безенчук колхозникĕсен çырăвĕ* çинчен. Вăл çырăва пичетленĕччĕ, есĕр ăна вуланă пулмала. Вăл тавлашмали çук аван çыру. Вăл пирĕн колхозниксем хушшинче колхоз ĕçĕн опăтлă тата ăстăнлă организатăрĕсемпе агитатăрĕсем сахал мар пуррине кăтаратать,—вĕсемпе

пирĕн çĕршыв мухтанма пултарать. Анчах вăл çырура пĕр тĕрĕс мар вырăн пур, епĕ унпа нийепле те килĕшме пултараймастăп. Ĕç акă мĕнре: Безенчукри йулташсем хăйсен колхозри ĕçне пĕчĕк ĕç, палăрсах та кайман пек ĕç вырăнне хураççĕ, анчах хăш чухне виçĕ аршăн тăршшĕ сăмахсем калакан оратăрсемпе çулпуççен ĕçне—аслă, тăвăмлă ĕç вырăнне хурса кăтартаççĕ. Йурать-и çавăнпа килĕшме, йулташсем? Çук, йулташсем, нийепле те килĕшме йурамасть унпа. Безенчукри йулташсем кунта йанăш тунă. Тен, вăл йанăша вĕсем хăйсем çинчен кăшкăрас темен пирки тунă пулĕ. Анчах учшăн йанăш—йанăш пулма пăрахмасть. Çулпуççене пĕртен-пĕр истори тăвакан çынсем вырăнне хурса, рабочисемпе хресченсене шута та илмен вăхăтсем хаљ иртсе кайнă. Халăхсемпе патшалăхсен пурнăçне хаљ çулпуççсем çеç мар, чи малтан, тата нимрен ытла ĕçхалăхĕн мĕлйунлă массисем тăваççĕ. Шавламасăр, йанрамасăр савăтсемпе хапрăксем, шахтăсемпе чугуҥ çулсем, колхозсемпе совхозсем тăвакан, пурнăçра мĕн кирлисене пурне те тăвакан, пĕтĕм тĕнчене тăрантарса тата тумлантарса тăракан рабочисемпе хресченсем,—акă камсем чăн-чăн паттăрсем, çĕнĕ пурнăç тăвакансем. Безенчукри йулташсем çакна маннă пулмала. Çынсем хăйсен вăйĕсене тивĕççĕр ытлашши хак пани, хăйсен тава тивĕçлĕ ĕçĕсемшĕн мăнкăмăлланса пуçĕсене ывăтни лайăх мар. Вăл каппайни патне илсе пырать, каппайни лайăх ĕç мар. Анчах çынсем хăйсен вăйĕсене тивĕççĕр пĕчĕк хак пама тапратсан, хăйсен „пĕчĕк“, „палăрман“ ĕçĕ пурнăçра аслă, тăвăмлă историри ĕçсене татса паракан ĕç пулнине курманни—пушшех те начартарах йапала.

Манăн Безенчукри йулташсене епĕ вĕсен çырăвĕ çумне çапла пĕчĕккех тӳрлетсе каланине ырлаттарас килет.

Тавайăр, йулташсем, çакăнпа пĕтерер.

(*Нумайччен ал çупаççĕ, хавассăн кĕрлеççĕ. Пурте ура çине тăрса Сталин йулташа саламлаççĕ. Делегатсем урра кăшкăраççĕ. „Сывă пултăр Сталин йулташ, урра! Сывă пултăр малта пыракан колхозник. Сывă пултăр пирĕн çулпуç Сталин йулташ!“ тесе кăшкăраççĕ залăра*).

## ТУПМАЛИ


Стр.

1. Çитенӳсем пирки пуççавăрăнни . . . . . . . . . . . . . . . 3
2. Кулаксен класне пĕтерес политикă çинчен хускатнă ыйту пирки . 10
3. Колхозник йулташсене панă ответ . . . . . . . . . . . . 15
4. Йалта ĕçлесси çинчен . . . . . . . . . . . . . . . . 35
5. Колхозник-ударниксен Петĕм сойузри пĕрремĕш сйесĕнче калани . 59


---


Редактор А. И. Золотов.
Техредактор В. Егоров.
Послано в производство 30-IX 33 г.
Подписано к печати 15-X-33 г.

Уп. Чувашлита № 1726. Заказ № 902. Тираж 4000. С. ф. б. 82×110/32 2 3/16 п. л.
В печ. листе 68.670 з. г. Чебоксары Канашская 16, тип. № 1 Чувашгиза.

И. СТАЛИН Вопросы колхозного движения

ЧУВАШПАРТИЗДАТ 1933 ЧЕБОКСАРЫ